Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

6 (2418) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
кăрлач, 29

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# Выльăх усраканăн тути çуллă

*Елчĕк район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп зоотехникĕпе Ирина Горшковăпа выльăх-чĕрлĕх отраслĕ пĕлтĕр мĕнле аталанни çинчен калаçтăмăр. Çулталăк вĕçленнĕ, пĕтĕмлетӳ тума вăхăт-çке. Итлетĕп те тĕлĕнетĕп: ял хуçалăх предприятийĕсен кăтартăвĕсем ӳснĕ, темиçе инвестици проектне пурнăçа кĕртнĕ... Пурте аван. "Уксахлакан хуçалăхсем çук-им районта?" – тĕпчетĕп эпĕ. Кăсăкланма сăлтав пур: ара, хальччен хам ĕçлесе пурăннă тăрăхра чипер, йĕркеллĕ хуçалăхсен шучĕ иккĕ-виççĕрен иртместчĕ, ыттисем аран кăна "сывлатчĕç". "Экономика тĕлĕшĕнчен хавшакраххисем пур-ха. Кăçал вĕсене аталану çулĕ çине кăларасшăн. Пĕтĕме памăпăр", – тет специалист.*

**– Ирина Ильинична, "хуçалăхсене пĕтме памастпăр" терĕр те – апла район администрацийĕ вĕсен ертӳçисемпе пит тачă ĕçлет. Унсăрăн çитĕнӳ тума йывăр-тарах пулĕ.**

– Вĕсемпе, чăн та, пухусемпе канашлусенче те, кашнине уйрăммăн чĕнсе те калаçатпăр. Вăй-хала хакласа тĕллевсем палăртатпăр. Тĕслĕхрен, пĕлтĕр мĕн тума йышăннă, çавна пĕтĕмпех пурнăçланă темелле. Акă ĕнер кăна фермерсене пуçтарнăччĕ-ха: ял хуçалăхĕнчи çĕнĕлĕхсемпе паллаштартăмăр, конкурссене хутшăнса грант çĕнсе илме май пурри çинчен калаçа кăтартрăмăр тата ытти те. Пухăва пынисем ятарлă конкурссене хутшăнас кăмăллă. Ку тĕлĕшпе вĕсем çулсеренех хастар. Çирĕм çын таран документсем тăратни те пулнă. Харăсах çакăн чухлĕ çын çĕнтереймест, паллах. Çапах та висĕм çул та, пĕлтĕр те фермер ĕçне пуçăнакансене пулăшмалли программăпа килĕшӳллĕн 3-шер çын, çемье фермине аталантармалли программăпа 1-ер çын гранта тивĕçрĕç.

**– Эпĕ ăнланнă тăрăх – вĕсем пурте выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес çула суйласа илнĕ. Çакă отрасль тупăшлине пĕлтерет -ши?**

– Çапла. Сĕт сăвассипе те, аш туса илессипе те, выльăх самăртассипе те пĕлтĕр кăтартусене ӳстернĕ (2012 çулпа танлаштарсан). Сăвакан ĕне йышĕ кăна çулталăкра ял хуçалăх предприятийĕсенче (фермер хуçалăхĕсене шутламасăр) 500 пуç ӳснĕ. "Прогресс", "Энтепе", "Победа" тата ытти пĕрлешӳсем ку йыша пуянлатнă, ăратлă выльăх туяннă. Çĕнĕ çула кĕтĕмĕр кăна темелле, "Прогресс" хуçалăх тата 80 пуç выльăх илсе килчĕ.

Çулталăка район 8033 пуç măйракаллă шултра выльăхпа пуçларĕ. Пĕлтĕр çак кăтарту 7627 пуçпа танлашнă. Сăвакан ĕнесен шутне 3017 пуçпа çитернĕ. Сĕт производстви уйрăмах тупăшлă. Хуçалăхсем патшалăх пулăшăвне – субсидие – тивĕçессишĕн ăмăртмалла тăрăшаççĕ. Иртнĕ çул ăна районти 18 ял хуçалăх предприятийĕнчен 15-ĕшĕ илнĕ, пĕтĕмĕшле 20 млн тенкĕлĕх. Пĕлтĕр кашни ĕнерен вăтамран 5197 кг сĕт суса илнĕ. "Победа" пĕрлешӳре – 7085 кг.

Юлашки тапхăрта сĕт хакĕ ӳсни хавхалантарать. Хальхи вăхăтра чи паха сĕте Патăрьелне 22 тенкĕпе ăсатаççĕ. Пĕлтĕр сутнă сĕтĕн 70 процентĕ чи паха сортпа ăсаннă.

**– Кивĕ, çурма юхăнчăк фермăсенче тупăш илеймĕн. Çакна лайăх ăнланатпăр ĕнтĕ.**

– Çулсерен пĕр-икĕ хуçалăхра фермăсене юсатпăр, çĕнететпĕр. Инвестици проекчĕсене хутшăнни ку ĕçе самай вăйлатма пулăшать. Пĕлтĕр акă "Энтепе" тулли мар яваплă пĕрлешӳре çĕнĕ ферма тунă. "Урожай", "Эмметево", "Победа" пĕрлешӳсенчи, Ленин ячĕллĕ ял хуçалăх кооперативĕнчи выльăх-чĕрлĕх фермисене юсанă, çуллахи лагерьсенче сĕт пăрăхĕсем вырнаçтарнă...

**– Ферма витисенче măйракаллă шултра выльăхсăр пуçне сысна нăриклетнине илтме пулать-и тата? Усал чир, "африка чуми" текенскер, сарăлласси шиклентернĕрен унăн йышĕ чакать теççĕ. Хăшпĕр районти ял хуçалăх предприятийĕсенче сысна пачах юлман темелле.**

– Маларахри çулсемпе танлаштарсан пирĕн районта та вĕсен йышĕ чакнă. Çапах та çичĕ хуçалăхра усраççĕ. Паянхи кун тĕлне – 9616 пуç. Ытларах пайĕ ăратлă сысна ĕрчетессипе ĕçлекен "Прогресс" хуçалăхра – 5370 пуç. Республикăра "Ландрас" йăха ĕрчетекен пĕртен-пĕр хуçалăх вăл. Сăмах май, районта ăратлă выльăха "Комбайн" кооператив та тытать. Кунта măйракаллă шултра выльăх ĕрчетеççĕ.

Эсир асăннă усал чиртен хӳтĕленсе ферма тавраш ĕнчи 5 çухрăмлă зонăра халăх сысна усрамасть. Ял тăрăхĕсенче сысна йышĕ чакни çакăнпа та çыхăннă. Çапах та ку таврара пурăнакансем сысна тытайманшăн пăшăрханмаççĕ. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ "Прогресс" туянма кăмăл тăвакансене сысна сутать.

**– Эсир хăвăр та "Прогресс" пĕрлешӳре ӳссе çитĕннĕ специалист тенине илтрĕм. Апла паха опыт пухнă. Район администрацийĕнче çулталăк ĕçлетĕр. Шаннипе чĕнсе илнĕ ĕнтĕ сире. Ăнăçу пултăр, выльăх йышĕ хушăнсах пытăр. Выльăх усраканăн тути çуллă теççĕ.**

**Ирина НИКИТИНА.**



## Çăмарта йӳнелет

Чăвашстат палăртнă тăрăх – кăçалхи кăрлач уйăхĕн 13-20-мĕшĕсенче ваккăн сутакан çăмарта – 6 (3,16 тенкĕ), рис – 2 (0,7), вир кĕрпипе пан улми 1 процент йӳнелнĕ. Çав вăхăтрах купăста – 10 (1,23 тенкĕ), пуçлă сухан – 5 (0,92), çĕр улми 4 процент (0,84 тенкĕ) хакланнă. Пахча çимĕçне упрасси тăкаклăран, условисем улшăннăран тата курттăм хак хăпарнăран çитес вăхăтрах вĕсем йӳнелмĕç.

Сĕт (çу шайĕ 2,5-3,2 процентли) – 2 (0,6 тенкĕ), услам çу 1 процент (3,09) хакланнă. Ку, паллах, сезонпа çыхăннă. Хĕлле сĕт туса илесси яланах чакать. Ытти апатçимĕç хакĕ пĕр шайрах юлнă. Иртнĕ çулхи кăрлачăн 20-мĕшĕпе танлаштарсан кăçал хура тул кĕрпи – 20 (6,47), чăх (пĕçĕ ашĕсĕр пуçне) – 12 (12,94), тип çу – 11 (8,15), тулă çăнăхĕпе çăкăр-булка – 9 (2,06 тата 2,88), вермишель – 5 (1,98), тăвар – 4 (0,4), хура чей – 3 (11,98), ĕне ашĕпе сысна ашĕ – 2 процент (4,57 тата 3,59) йӳнĕрех.

ШУХĂШ

# Ялта маттурсем пурах

Эрне вĕçĕсенче час-часах тăван яла васкатăп. Мана никам та кĕтмест унта. Чӳречерен пăхакан та, хапха умне тухса кĕтсе илекен те çук. Çапах та чун çуралнă тăрăхах туртать. Тепĕр чухне юлашки рейссемпе çула тухатăп. Района çитнĕ тĕле 20 сехет те çитет. Малалла вара ирĕксĕрех такси тытма тивет. Хĕл кунĕнче вун икĕ çухрăма çуран парăнтараймăн. Çăмăл машинăсем Патăрьелĕнче çумăр хыççăнхи кăмпасем пекех лараççĕ. Укçа парсан таçта илсе çитерме хатĕр. Хальхинче те пулăшу ыйтса таксистсем патне пытăм. Туххăмрах лартăмăр та ял енне вĕçтертĕмĕр. Калаçма юратакан водитель лекрĕ. Çăварне хупма та пĕлмест. «Сирĕн тăрăхри Апрушнай паççулккине килсе кайрăм нумаях пулмасть, – терĕ хайхискер. – Пĕр мăшăра леçсе ятăм. Чĕмпĕртен кусса килеççĕ. Упăшкин – Чĕмпĕрте, арăмĕн Шупашкарта хваттерсем пур тет. Хăйсем вара çак ялта çурт туяннă. Ватлăха унта иртересшĕн».

Апрушнай паççулкки 1929 çулта йĕркеленнĕ. Ăна Нăрваш Шăхаль ялĕнчен уйрăлса тухнисем пуçарса янă. Халĕ кунта 48 çын пурăнать. Клуб, лавкка пур. Район центрĕнчен 18 çухрăмра вырнаçнă вăл. Асфальт çул ялах çитет. Транспорт час-часах çӳремен ни çеç чăрмав кӳрет.

– Илемлĕ вырăнта ларать Апрушнай, – терĕм эпĕ калаçăва малалла тăсса. Вăрман варринче пулнăран санатори-курорт евĕрлех унта. Ахальтен мар ял çынни выльăх-чĕрлĕх, вĕлле хурчĕ чылай тытать.

– Мана хама та çавнашкал çĕртре пурăнма килĕшет. Выльăх усрама юрататăп. Çитменнине усă сывлăш, – кăмăллăн калаçрĕ водитель.

– Халĕ выльăх-чĕрлĕхпе тупăш илме çуккине калаççĕ. Апла пулсан мĕн ĕçлесе пурăнмалла-ха ялта?

– Ĕçлесен тупăш пулатех. Сурăх та, сысна та усă кӳрет. Сысна нимĕн те тиркемест. Кăвакарнă тыр-пула пĕçерсе парсан та пĕтĕмпех çисе ярать. Лаша е ĕне ăна шăршлать çеç. Унсăр пуçне апат юлашкине те юратсах кавлет. Çулла аш-какай хакĕ самаях чакрĕ. Юрать-ха халĕ ӳсрĕ, пĕр килограмм хакĕ – 160 тенкĕ. Çак кунсенчех теприне пусса парасшăн. Вырнаçтарасси пирки кулянмалла мар, киле килсех туянаççĕ. Сурăх та йышлă усратпăр: 22 пуç паянхи кун. «Романовский» ăрат çав тери ĕрчевлĕ. Харăсах 4-5 путек пăранлать. Анчах вĕсем черченкĕ. Вайсăрскерсене пăхма пĕлмелле. Аттепе анне аппаланаççĕ вĕсемпе. Ĕмкĕчпе сĕт ĕçтереççĕ. Çапла майпа ура çине тăратаççĕ. Сурăх та тупăшлă. Шашлăк валли туянаççĕ. Халĕ çамрăксем ун валли укçа шеллемеççĕ. Унăн ашĕ хаклăрах: 200 тенкĕ ытла (килограмĕ). Лаша усрас ĕмĕт те пур. Ăна пăхма та ансатрах, ятарласа апат пĕçермелле мар. Какайĕ те хаклă – 220 тенкĕ.

Тен, татах каламалли пурччĕ пулĕ арçыннăн, анчах кил умне çитрĕмĕр. Хуларан яла çынсем пурăнма куçни, унта çакнашкал маттур çамрăксем пурăнни савăнтарчĕ мана. «Ял ĕçкĕ ăшне путнă» тенине часчасах илтме пулать. Çав вăхăтрах пурнăç çыннисене те асăрхамасăр иртмелле мар. Вĕсем – яла аталантаракансем. Ӳркенмесен çĕрпе те, выльăх-чĕрлĕхпе те ĕçлеме пулать. Таксист калашле – кашни ĕç кăшт та пулин усă кӳрет.

Ĕçкĕç капмар çурт çĕклеймĕ. Республикăн кăнтăр районĕсенчи ялсем куç умĕнче çĕнелсе, илемленсе пыраççĕ. Хăшĕ укçана вырăнта ĕçлесе илет, тепри инçе çула тухса каять. Пурнăça сыпăнтарас тесе тăрăшать. Кун пек чухне чăваша «кӳршĕ-аршăран юлас марччĕ» тени те пулăшатех пулĕ.

**Валентина ПЕТРОВА.**

КУЛĂШ, ПУЛĂШ!



## ÇАНТАЛĂК

| | Вăхăт | 29.01 | 30.01 |
|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2–4 сехетре | –32 | –32 |
| | 14–16 сехетре | –26 | –20 |
| Юр çăвать | | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 765 | 773 |

Пурнӑҫ кӗреки

# Ларнипе лайӑх пулмасть

Шупашкар районӗнчи Ҫӗньяла пырса кӗнӗ ҫӗрте илемлӗ те хӑтлӑ ҫурта асӑрхамасӑр иртеймӗн. Ҫу кунӗсенче вӑл чечек ӑшне путать. Калча, пахча ҫимӗҫӗ тулӑнма килекенсем сарӑ-хӗрлӗ ҫеҫкесене ытараймасӑр тинкереҫҫӗ. Ҫакӑн пек илемлӗхре пурӑнаҫҫӗ Зинаида Петровӑпа Александр Алексеев.

– Упӑшкапа, Александр Витальевичпа, ватлӑхра пӗрлешрӗмӗр, – терӗ ҫутӑ сӑн-питлӗ патвар хӗрарӑм. – Унччен иксӗмӗрӗн те ҫемьесем пулнӑ, анчах манӑн та, унӑн мӑшӑрӗ те пурнӑҫран вӑхӑтсӑр уйрӑлса кайрӗҫ. Унӑн – икӗ, манӑн тӑватӑ ача тӑлӑха юлчӗҫ. Вӗсем пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тӑчӗҫ ӗнтӗ. 15 ҫул килӗштерсе пурӑнатпӑр. Пӗрлех ывӑлпа хӗр тата мӑнукӑмсем. Ҫурт пысӑк, пурин валли те вырӑн ҫитет. Йышпа кичем мар, вӑхӑт иртни сисӗнмест, ӗҫ те кал-кал пырать.

Чӑн та, малтанах Зинаида Павловнӑн кӗҫӗн ывӑлӗ амӑшӗ ватлӑхра ҫемье телейне тупасса ӗненмен, шанман. Ҫавӑнпа хӑй кӑмӑлсӑррине пытарман. Ҫывӑх ҫынни ҫӗнӗ ҫемьере телейлӗ пулнипе ҫеҫ килӗшме тивнӗ.

Зинаида Петрова пенсире ӗнтӗ. Ҫапах халӗ те Шупашкар районӗнчи Кадыков ячӗллӗ хуҫалӑхра вӑй хурать.

– Хушма хуҫалӑха шалупа ҫеҫ тытса тӑма йывӑр. Апла ҫемьене тӑрантармалӑх кӑна мар, сутмалӑх та туса илмелле. Пирӗн пай ҫӗрӗ 4 гектар. Хушма хуҫалӑха тытса пыма 0,50 гектар уйӑрса панӑ. Пай ҫӗрне предприятие арендӑна панӑ: пурне те ӗлкӗрсе пыма вӑй-хал ҫитмест. Ачасем май ҫитнӗ таран пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ-ха, ҫапах вӗсен хӑйсен пурнӑҫӗ, ӗҫӗ-хӗлӗ.

Малтанах ҫемье выльӑх-чӗрлӗх йышлӑ усранӑ. Ӗне, сысна, хур-кӑвакал, чӑх-чӗп тытнӑ. «Пӗлтӗр ӗнене сутрӑмӑр. Ялта ӗне сахалланса юлнипе кӗтӳ черечӗ хӑвӑрт ҫаврӑнса ҫитет. Хӗрӳ тапхӑрта ӗҫ пӑрахсах ҫемьепе кӗтӗве каймалла. Ют ҫынран пулӑшу ыйтма 700 тенке кайса ларать, – ӑнлантарать кил хуҫи арӑмӗ. – Сыснасем, кайӑк-кӗшӗк пулсан та ҫителӗклӗ». Кӗҫех ҫемье теплицӑра калча, пахча ҫимӗҫӗ ҫитӗнтерме пуҫланӑ.

Кун вӑрӑмланма пуҫласанах вӑрлӑх акнӑ ешӗксене пӳрте вырнаҫтараҫҫӗ. Пысӑк зал вӑрӑм сӗтелсемпе тӑварлансах ларать. Электроҫутӑпа усӑ курнӑ май калча хӑвӑрт шӑтса тухать. Пуш уйӑхӗнче ӑна пысӑках мар теплицӑна куҫараҫҫӗ. Теплицӑна тимӗр кӑмакапа ӑшӑтмалла тунӑ.«Газпа хаклӑ, вутти ҫителӗклӗ. Ҫуртсене газ кӗртнӗ хыҫҫӑн ҫынсем вутӑпа усӑ курсах каймаҫҫӗ», – тет пахчаҫӑ. Ӑшӑ пӑрӑх тӑрӑх саланать.

Иртен пуҫласа каҫченех пахчара тар тӑкаҫҫӗ: калча, пахча ҫимӗҫӗ туса илсе сутаҫҫӗ. Кунта суйламалӑх пур: пӑрӑҫ, помидор, хӑяр, купӑста, кавӑн е чечек калчи... Хакӗ те ҫыртмасть. Ҫулсерен виҫӗ пин ытла калча ашкӑрса ӳсет теплицӑра. Паллах, килте ларсах ун чухлӗ сутаймастӑн. «Шупашкарти тӗп пасарта лайӑх каять, анчах унта вырӑн тупма йывӑртарах. Ирӗксӗрех пӗчӗкрех пасара куҫма тиврӗ», – терӗ З. Павлова. Ҫу уйӑхӗнчех теплицӑра хӑяр, унтан ытти пахча ҫимӗҫӗ ҫитӗнсе ҫитет. Ҫапах калчаран тупӑш ытларах кӗрет. Туянакансем пӗр ҫынсемех темелле. «Иртнӗ ҫул сирӗн калчаран пысӑк тухӑҫ илтӗмӗр», – тенине илтме кӑмӑллӑ. Хӑш-пӗр чухне, вӑхӑт ҫитменнипе е хӑяр-помидор пиҫсе ӗлкӗрейменнипе, пасара тухманни те пулать. Пытармалли ҫук, ун пек чухне пытти сутуҫӑсем хашах сывласа яраҫҫӗ, хӑвӑртрах хӑйсен таварне ярӑнтарма тӑрӑшаҫҫӗ.

– «Зина тухсан сутасси пӗтрӗ вара», – теҫҫӗ мана. Вӗсен таварне те тиркеймӗн, анчах ҫынсем пӗр хӑнӑхнӑ-пӗлнӗ сутуҫӑ патнех туртӑнаҫҫӗ. Тата эпӗ вунӑ ҫула яхӑн ӗнтӗ ҫак ӗҫре. Хамӑн клиентсене тахҫанах палласа ҫитнӗ. Пахчаҫӑсене сӗнӳсемпе те пулӑшма тӑрӑшатӑп, – пӗлтерет Зинаида Павловна. – Хуларан, ялтан туянма килех пыракансем те пур. Хӑш-пӗр чухне хуҫалӑхра ӗҫлеме юлнӑ мӑшӑрӑн вӗсен ыйтӑвне тивӗҫтерсех вӑхӑчӗ иртсе каять. Пасартан ывӑнса тавранниине пӑхмасӑрах ӑна пулӑшма тухатӑп. Ҫулла ирхи тӑваттӑра ӗҫе тытӑнатпӑр. Сутма ирпе татнӑ хӑяра кӑна илсе тухатпӑр. Кун пекки чӗрӗ, хитре. Вӗсене те теплицӑра туса илнӗ май ҫимӗҫӗ хура кӗрчченех пулать. Ҫапах хӑяр-помидор малтанлӑха кӑна хаклӑрах, кайран хӑвӑрт йӳнелсе каять. Тупӑш ытлашши илеймӗн.

– Ака-сухан хӑйӗн вӑхӑчӗ. Калчана вӑхӑтра сутаймасан, лартса хӑвармасан вӑл сая кайӗ.

– Пӗр ҫулхине пӑрӑҫ нумай акрӑм. Калчине ниепле те сутса пӗтреймерӗм – пурте пӑрӑҫ туса илмеҫҫӗ. Пӑрахма та шел. Ҫӗр типсе кайиччен ҫур пахча тенӗ пек пӑрӑҫ лартса тултартӑм. Кӗркунне ҫимӗҫне йӳнӗпех сутса ятӑм. Сая каймарӗ темелле.

Унччен симӗс сухан та ҫитӗнтерсе пӑхнӑ-мӗн. Унпа хӑйӗн нуши – ҫийӗнчех сутса ӗлкӗреймесен ешӗл ҫимӗҫ сарӑхса юрӑхсӑра тухать. Юлашки ҫулсенче тата вӑрлӑхӗ те виҫесӗр хакланса кайнӑ. Ирӗксӗрех симӗс сухан ҫине алӑ сулнӑ.



«Мӗн акатӑн, ҫавӑ шӑтать», – теҫҫӗ. Вӑрлӑха ятарлӑ лавккара туянма тӑрӑшаҫҫӗ. Хӑш-пӗр чухне почта урлӑ ҫырӑнса илеҫҫӗ. Малтанхи ҫул пӗчӗк лаптӑка акаҫҫӗ. Тухӑҫлӑхне кура лайӑххах сортсене суйласа илеҫҫӗ, ӗрчетеҫҫӗ.

– Помидор 14 сорт лартса пӑхрӑмӑр. Виҫҫӗшне ҫеҫ хӑвартӑмӑр: «Лимонный», «Добрый Никитич», «Илья Муромец». Вӗсем пирӗн тӑрӑхра аван ҫитӗнеҫҫӗ, тухӑҫлӑхӗ пысӑк, чирлемеҫҫӗ. Пыл хурчӗ сахал вӗҫнипе хӑйне хӑй шӑркаланакан вӑрлӑхпа усӑ куратпӑр, – теҫҫӗ пахчаҫӑсем.

Ҫу кунӗсем ҫемьешӗн хӗрӳ тапхӑр. Ҫуркунне пахчана йӑран чавма ҫемйипех тухаҫҫӗ. Пысӑк лаптӑка кӗреҫепе касса тухма ҫӑмӑл мар. Ывӑлӗ-хӗрӗ ашшӗне тахҫанах мотоблок илме сӗннӗ. Анчах кил хуҫи ҫӗр пахалӑхӗ чакасран яхӑнне те яман. «Ҫӗре кӗреҫепе чавсан ҫум курӑкӗ алхасмасть. Вӑй, йыш пур чухне техникӑна пахчана кӗртместӗп, хамӑрах ӗҫлетпӗр», – хирӗҫленӗ Александр Витальевич. Ӑна ӳкӗте кӗртейменнипе ачисем хайхине ҫуралнӑ кун ячӗпе тытнӑ та мотоблок парнеленӗ. «Кӑҫал унпа сухаласа пӑхасшӑн. Ҫулсем иртнӗ май вӑй-хал чакса пырать. Ҫӗр ӗҫӗ йывӑр, ҫамрӑксен те ӗлкӗхи пек нушаланас килмест», – пӗлтерчӗ Зинаида Павловна.

Теплицӑсене полиэтилен пленкӑпах витеҫҫӗ.

– Ҫулсерен пленка туянса тӑкакланиччен, тен, теплицӑна поликарбонатран е ҫирӗпрех материалтан тусан аванрах мар-ши?

– Капла теплицӑна хӗлле юр тултарать. Вӑл ҫӗре лайӑхлатать, нӳрӗклӗх аван упранать. Пленка хаклӑ мар, 10-15 пин тенке кайса ларать.

Иртнӗ ҫул ӗҫчен те туслӑ ҫемье ҫӗнӗ ҫурт лартма никӗс янӑ. Ҫемьелле хӗрӗ валли кӑҫал кермен ҫӗклесе лартасшӑн. «Ҫамрӑк ҫемьен уйрӑм пурӑнмалла», – тет аслӑ ӑру. Ывӑлӗ-хӗрӗ ялтах тымар яни ашшӗ-амӑшне савӑнтарать. Апла вӗсем тӑрӑшни, вӑй хуни сая каймӗ.

**Лариса НИКИТИНА.**

# Ҫӑпатине те хуҫнӑ, пӳртне те тунӑ

Вӑрнар районне кӗрекен Кушар-Юнтапа ялӗнчи Василий Семенович Шестаков 80 ҫулхи юбилейне паллӑ турӗ. Пӳрт тулли хурӑнташ-тӑван, кӳршӗсем пуҫтарӑнчӗҫ ӑна саламлама. Ҫак кун Василий Семенович ячӗпе нумай ӑшӑ сӑмах каларӗҫ. Ӗҫченлӗхне, вашаватлӑхне, шӳтлеме юратнине пӗрре мар палӑртрӗҫ.

Арӑмӗ, Нина Борисовна, ырӑ кӑмӑллӑ та уҫӑ ҫын, савнӑ мӑшӑрӗпе 54 ҫул ҫемье ӑшшине упрать. «Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест», – теҫҫӗ. Яштака кӗлеткеллӗ, кӗрнеклӗ виҫӗ ывӑлӗ тӑван ҫӗр-шыва сыхлама тивӗҫлӗ пулнӑ. Халӗ пурте ҫемьеллӗ. Аслашшӗпе асламӑшне тӑватӑ мӑнукӗ савӑнтарать. «Ҫак килте пире ӗҫчен, сӑпайлӑ пулма вӗрентнӗ», – тав сӑмахӗ каларӗҫ ывӑлӗсем.

Василий Семеновичӑн хыҫра юлнӑ кунӗсем, иртнӗ ҫулӗсем сӑн-пичӗ ҫинче тарӑн йӗр хӑварнӑ. Йывӑр вӑхӑта лекнӗ унӑн ачалӑхӗ. Ашшӗнчен виҫӗ ҫулта тӑлӑха юлнӑ. Ҫемьере пӗртен пӗр ывӑл пулнӑскерӗн пӗчӗкренех арҫын ӗҫӗсене тума тивнӗ. Ҫиччӗрне ҫӑпата юсама, каярах ҫынсем валли те ӑсталама вӗреннӗ. «Ҫӑпатасем хӑвӑрт ҫӗтӗлетчӗҫ. Вӗсене юсама пиччене каҫпа лартса параттӑмӑр, ир валли хатӗрччӗ. Хӑш вӑхӑтра ӗлкӗрнӗ-ши вӑл?» – аса илет Нина йӑмӑкӗ.

Ашшӗ ҫукки ҫемьешӗн пысӑк йывӑрлӑх кӑларса тӑратнӑ. Апат-ҫимӗҫ, укҫи-тенки ҫителӗксӗр. Аслисемпе танах колхозра вӑй хунӑ, ҫӗнтерӗве ҫывхартма пулӑшнӑ.

Вӗренӳ заведенийӗсем вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче те хӑйсен ӗҫне пӑрахман. Пуҫламӑш класа вӑрҫӑ пуҫланнӑ ҫул кайнӑ, тӑрӑшса вӗреннӗ, юлса пыракансене пулӑшнӑ. Ҫакӑншӑн ӑна кашни пӗрер пӑта панӑ. Ҫемьешӗн ҫав тери пысӑк пулӑшу пулнӑ ку.

Ҫиччӗмӗш класран ылтӑн медальпе вӗренсе тухнӑ. Пӗчӗк пӳрт пысӑк ҫемьешӗн тӑварланнӑ. Василий кирпӗч ҫапма вӗреннӗ: тӑмне ҫӑрса, калӑпӑшне туса, кӑмакара типӗтсе хатӗрленӗ. Пушӑ вӑхӑт тупӑнсанах ҫак ӗҫе малалла тӑснӑ. Шкул ачи кирпӗч ҫурт лартас шухӑшпа пурӑннӑ.

19 ҫула ҫитсен Австри ҫӗрӗнче радистразведчик пулса виҫӗ ҫул ҫӗр-шыв чысне сыхлать.

Амӑшӗ пӗччен юлнӑран малалла вӗренес шухӑшӗ татӑлать. Ялти чипер те ӗҫчен Нина ятлӑ хӗре килӗштерет. Туй хыҫҫӑн, икӗ эрнерен ҫамрӑк мӑшӑр кивӗ ҫурта сӳтет. Тинех ача чухнехи ӗмӗтне пурнӑҫа кӗртет: ялта пӗрремӗш чул ҫурт хӑпартса лартать. Анчах йӗпе-сапара тата хӗлле ҫӗнӗ пӳртре нӳрӗ сывлӑш тӑнӑ. Тепӗр 10 ҫултан Василий вӑрман касса иккӗмӗш хут хӑтлӑ йывӑҫ ҫурт хӑпартать.

Ал ӗҫ маҫтӑрӗ мӗн пур ӗҫе хӑй тӑвать. «Гвардеец» колхоз малтисен ретӗнче пынинче унӑн тӳпи те пысӑк. 9 ҫул ревком членӗнче вӑй хурать.

Ӗҫченлӗхне, тӳрӗлӗхне, тараватлӑхне кура ял халӑхӗ ӑна ырӑпа асӑнать, хисеплет.

«Пурнӑҫ – хӑналӑх», – теҫҫӗ. Ҫӗр ҫине ахаль килмен Василий Семенович. Пултаруллӑ ҫыннӑмӑра ҫирӗп сывлӑх, телей, вӑрӑм кун-ҫул сунатпӑр.

**Надежда НАЛИМОВА-СУДАКОВА.**

## АХ, АНЧАХ...

### Хыт кукар ертӳҫӗ

Хӑш-пӗр ертӳҫӗ ҫынсене тӳлевсӗр ӗҫлеттерсе тупӑш илесшӗн.

Тӑвай районӗнчи «Сельхозхимик» пӗрлешӳ директорӗ Решит Галимзянов укҫи пур ҫӗртех 14 ӗҫчене икӗ уйӑх пӗр пус та тӳлемен. Парӑм 250 пин тенке ҫитнӗ. Унсӑр пуҫне ертӳҫӗ пурлӑх сутса тунӑ тупӑша хӑйӗн кӗсйине чикме те вӑтанман.

Судра вӑл хӑйӗн айӑпне йышӑннӑ. Ҫапах та чавса ҫывӑх пулсан та ҫыртаймӑн халӗ. Пуҫлӑха условлӑ майпа 4 ҫуллӑха ирӗкрен хӑтарнӑ, 110 пин тенкӗлӗх штрафланӑ.

### Полицие хирӗҫ тӑнӑ

Шупашкар районӗнчи Ҫӗньял ялӗнче пурӑнакан 52-ри арҫын арӑмӗпе харкашнӑ. Психика чирӗпе чирлекенскер тен темӗн те кӗтме пулать ҫав. Хирӗҫӳ-ҫапӑҫӑва чарма пынӑ полици ӗҫченне арҫын ҫӗҫӗпе аллинчен суранлатнӑ. Ҫапах та «паттӑра» тытса чарнӑ, полици уйрӑмне илсе ҫитернӗ.

Судпа психиатри экспертизи чирлӗ ҫын преступлени тунӑ вӑхӑтра хӑрушлӑх пирки шутлама пултарайманнине ҫирӗплетнӗ. Ӑна ирӗксӗрлесе сиплеме ярӗҫ.

### Кивҫен илме лайӑх та...

41 ҫулти Татьяна Орлова ҫынсене улталаса укҫа сӑтӑрнӑшӑн суд тенкелӗ ҫине ларнӑ. 2008-2012 ҫулсенче Шупашкарта косметика салонӗсем уҫасси пирки пӗлтерсе вӑл ҫынсене хӑйӗн бизнесне укҫа хывма ӳкӗте кӗртнӗ. Вӗсенчен 50 пинрен пуҫласа 670 пин тенкӗ таран кивҫен илнӗ. Унсӑр пуҫне банксенчен те. Укҫана тавӑрса пама шутламан та. Вӑл граждансене тата банксене 8 млн ытла тенкӗлӗх сиен кӳнӗ.

Шупашкарти Ленин район сучӗ хӗрарӑма 4 ҫул та 9 уйӑхлӑха ирӗк прависӗр хӑварма йышӑннӑ. Анчах вӑл ача кӗтнине кура айӑплава каярах хӑварнӑ.

### Эх, пулмарӗ пуясси...

Хальхи ҫамрӑк ӗҫлеме килӗштермест. Укҫана урӑх ҫулйӗрпе тупма тӑрӑшать. Акӑ Шупашкар каччи те ҫаплах пуйма шутланӑ. Автомобильсем тӑратмалли вырӑнта пӗр арҫынна 4 г наркотик сутнӑ. Йӗрке хуралҫисем ӑна вырӑнтах тытса чарнӑ. Пуяс вырӑнне 11 ҫул тӗрмере ларма, 50 пин тенкӗ штраф тӳлеме тивӗ унӑн.

**Валентина МАКСИМОВА.**

## Сăнсем: Атăльял (Шупашкар районĕ)





Тамара Шаплина пенсионер



Сорокинсем: Лазарь Алексеевичпа Софья Романовна ветерансем, ывăлĕ Сергей, кинĕ Елена



Клуб ертӳçи Леонид Фадеев



Хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Лидия Фадеева



Вячеслав Семенов ӳнерçĕ



Çамрăк ăру

Сергей Журавлев сăн ӳкерчĕкĕсем

КУН-ÇУЛ

# Яланах хисепре

Муркаш районĕнче пурăнакансем Николай Аршуткина лайăх пĕлеççĕ. Вăл чылай çул район пульницинче ĕçлерĕ.

Николай Арсентьевич 1924 çулта Вăрнар районĕнчи Мăн Явăш ялĕнче çуралса ӳснĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче çар фельдшерĕ пулнă, вун-вун аманнă салтака сипленĕ, ура çине тăратнă. Вăрçă хыççăн Хусанти медицина институтĕнче вĕреннĕ, хирург профессине алла илнĕ. Муркашри тĕп пульницăра малтанах хирургра вăй хучĕ, каярахпа – тĕп врачра.

Эпĕ унпа ăнсăртран паллашрăм. 1958 çулта янах шăммине сиктертĕм. Çавна май вырăнти сыватмăша та, шăмă лартакан ăстасем патне те çитрĕм, анчах никам та янаха вырăна лартаймарĕ. Муркашах кайма тиврĕ. Ĕç вăхăчĕ вĕçленнине пăхмасăрах Николай Аршуткин мана йышăнчĕ.

Çулсем иртсен манăн хирургпа тепĕр хут тĕл пулма тӳр килчĕ. Ун патне каллех инкек илсе çитерчĕ. Ялти вăй питти арçынсемпе ферма вити валли пĕрене тиеме кайрăмăр. Çул çинче тиев ӳпĕнчĕ. Эпĕ, çӳлте лараканскер, пĕрене айне пултăм. Юлташсем мана тӳрех сыватмăша леçрĕç. Николай Арсентьевич кĕтсе илчĕ. Атта хывсан ура хуçăлнине пĕлтĕм. Икĕ уйăх сиплентĕм унта. Пултаруллă тухтăр мана ура çине тăратрĕ. Çакăншăн паянхи кунччен тав тăватăп ăна. Каярахпа унпа пиччене Николай Яковлева паллаштартăм. Вĕсен туслăхĕ çирĕп пулчĕ. Халĕ те пĕр-пĕринпе çыхăну тытаççĕ.

Хирург ĕçĕ çăмăл мар. Ăсталăх та, çынлăх туйăмĕ те кирлĕ. Николай Арсентьевич пек маттур тепĕр тухтăрпа паллаштарасшăн эпĕ вулакана. Вăл – Владислав Данилов, Муркашри сыватмăшра 33 çул ĕçлет. Халĕ те тĕп врач ĕçне пурнăçлать. Темиçе хут та Чăваш Республикин Аслă Канашĕн депутатне суйланчĕ. 2006 çулта «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ» ята тивĕçрĕ. Владислав Григорьевич чылай çынна вилĕмрен çăлнă.



Н. Аршуткинпа Н. Яковлев

Николай Аршуткин Владислав Данилов пĕр-пĕринпе тачă çыхăну тытаççĕ. Икĕ хирургăн калаçмалли тупăнатех.

**Илья ЯКОВЛЕВ. Муркаш районĕ.**

# Юсавлӑ – шанчӑклӑ

**Раҫҫей Федерацийӗн правительстви хӑй тӗллӗн ҫӳрекен машинӑсене тата ытти йышши ҫакнашкал техникӑна юсавлӑх тӗлӗшӗнчен тӗрӗслемелли ҫӗнӗ правилӑсене (правила проведения технического осмотра) ҫирӗплетнӗ.**



### Техника шайне шута илсе

Юсавлӑха патшалӑх енчен пӑхса тӑракан органсенче шута илнӗ хӑй тӗллӗн ҫӳрекен машинӑсемпе ытти йышши техникӑна тӗрӗслемелли правилӑсене РФ правительствин 2013 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 13-мӗшӗнчи постановленийӗпе йышӑннӑ. Унта палӑртнӑ машинӑсене техника тӗрӗслевӗ витӗр кӑлармалли йӗркене тата вӑхӑта ҫирӗплетнӗ. Хӑй тӗллӗн ҫӳрекен машинӑсем тата ытти йышши техника шутне мӗн-мӗн кӗрет-ха? Тракторсем, ҫул тунӑ чухне, строительствӑра тата ытти ҫӗрте усӑ куракан хӑй тӗллӗн ҫӳрекен машинӑсем, вӗсен прицепӗсем. Ку йыша такӑр мар ҫулпа чупма пултаракан урапаллӑ мототранспорт хатӗрӗсем кӗмеҫҫӗ, енчен те вӗсен топливӑпа ӗҫлекен двигателӗн калӑпӑшӗ 50 кубла сантиметртан пысӑкрах е ҫутӑпа ӗҫлекен двигателӗ хӑватлӑхпа 4 киловатт ытла пулсан.

### Мӗн чухлӗ тӳлемелле?

Машинӑсен тӗрӗслевне патшалӑх техника надзорӗ йӗркелесе ирттерет. Тӗрӗслев витӗр тухнине ҫирӗплетекен документ панӑшӑн патшалӑха укҫа тӳлеме тивет. РФ налук кодексӗпе килӗшӳллӗн унӑн виҫи – 300 тенкӗ.

### Мӗн вӑхӑтран тӗрӗслеҫҫӗ?

Машинӑсен юсавлӑхне ҫак тапхӑртан тӗрӗслеттерсе тӑмалла:

1) ҫулсӑр-мӗнсӗр чупма пултаракан, пассажирсем турттаракан автотранспорт хатӗрӗсене, енчен те водитель ларкӑчӗсӗр пуҫне ларса пымалли вырӑн шучӗ 8-тан иртсен, – кашни 6 уйӑхран;

2) ытти машинӑсене – кашни ҫул.

Пӗрремӗш тӗрӗслеве патшалӑх техника надзорӗ машинӑсене шута илнӗ (регистрациленӗ) хыҫҫӑн тӳрех ирттерет.

Туса кӑларнӑранпа ҫулталӑк иртмен тата ӗҫлеттермен машинӑсен (ҫулсӑр-мӗнсӗр чупма пултаракан,пассажирсем турттаракан автотранспорт хатӗрӗсене шута илмесӗр, енчен те водитель ларкӑчӗсӗр пуҫне вырӑн шучӗ 8-тан иртсен) юсавлӑхне тӗрӗслемесӗрех тӗрӗслев витӗр тухни ҫинчен калакан документ параҫҫӗ.

Ун хыҫҫӑнхи тӗрӗслевсене вырӑнти патшалӑх техника надзорӗ палӑртнӑ тӑрӑх ҫирӗплетнӗ тӑтӑшлӑха, шута илнӗ машинӑсен йышне, вӑл ӑҫтине, ӑна хӑш тапхӑрта ӗҫлеттернине тата тӗрӗслев йӗркелеме вырӑн пуррине кура машина хуҫисемпе калаҫса татӑлса, вырӑна, куна, вӑхӑта палӑртса ирттереҫҫӗ. Е – машинӑсене ӑҫта шута илнине пӑхмасӑр патшалӑх техника надзорӗ вырнаҫнӑ ҫӗрте килӗшсе татӑлнӑ кун тата вӑхӑтра.

### Мӗн тӗрӗслеҫҫӗ?

1) документсем (вӗсене каярах палӑртӑпӑр) пуррине, патшалӑха укҫа тӳленине;

2) машинӑсем документсенче кӑтартнипе пӗр килнине;

3) машинӑсен юсавлӑхне (ҫӳлерех асӑннӑччӗ – пӗрремӗш хут ятарласа тӗрӗслемен машинӑсене шута илмесӗр);

4) тӗрӗслев витӗр тухни ҫинчен калакан документа ҫырса хатӗрлеҫҫӗ.

### Мӗнле документсем кирлӗ?

Машина хуҫи е вӑл шаннӑ ҫын машинӑпа пӗрле ҫак документсем тӑратать:

1) хӑй кам пулнине ӗнентерекен документ;

2) шаннӑ ҫыннӑн доверенноҫӗ е ӗҫ тума ирӗк паракан ытти йышши документ;

3) машинӑпа ҫӳреме ирӗк панине ҫирӗплетекен документ;

4) машинӑна шута илни ҫинчен калакан свидетельство;

5) транспорт хатӗрӗн хуҫи гражданла яваплӑхне страхланӑ полис (енчен те ку тивӗҫе федераци саккунӗпе ҫирӗплетнӗ пулсан).

Асӑрхарӑр ӗнтӗ, кунта патшалӑха укҫа тӳленин квитанцине кӑтартман. Мӗншӗн-ши? Мӗншӗн тесен машина тӗрӗслев витӗр тухни ҫинчен паракан документшӑн укҫа тӳленине патшалӑх техника надзорӗн органӗ ведомствӑсен хушшинчи электрон ҫыхӑну тытӑмӗ урлӑ пӗлсе тӑрать. Ҫапах та ку квитанцие машина хуҫи патшалӑх техника надзорӗн органне хӑйӗн кӑмӑлӗпе тӑратма пултарать.

### Свидетельствӑна ҫухатсан

Тӗрӗслев витӗр тухни ҫинчен калакан свидетельствӑна ҫухатсан е юрӑхсӑра кӑларсан (ҫӗннипе улӑштармалли вӑхӑт вӗҫленмесен те) техника надзорӗ дубликатпа тивӗҫтерет. Ӑна илме машина хуҫин е вӑл шаннӑ ҫыннӑн ыйтса ҫырмалла, унччен маларах патшалӑх техника надзорӗн документшӑн укҫа тӳлени ҫинчен хыпар илмелле.

Свидетельство хутне, ӑна ҫырса тултармалли йӗркене, упрассине тата шутран кӑларассине РФ Ял хуҫалӑх министерствинче ҫирӗплетеҫҫӗ.

### Акт ҫырма тивсен

Машина хӑрушсӑрлӑх ыйтнине тивӗҫтермест тейӗпӗр. Кун пек чухне тӗрӗслев актӗнче машинӑн хӑш пайӗ юсавсӑррине кӑтартаҫҫӗ. Акт хучӗ епле пулмаллине, ӑна ҫырса тултарассине те РФ Ял хуҫалӑх министерствинче палӑртаҫҫӗ. Машинӑна тӗрӗсленӗ чухне акт ҫырма тивнӗ пулсан, ӑна тепӗр хут тӗрӗслеттермелле.

Хальхинче, енчен те машинӑна тӗрӗслеве акт ҫырнӑ хыҫҫӑн 20 кун хушшинче тӑратнӑ тӑк, патшалӑх техника надзорӗ актра кӑтартнӑ ҫитменлӗхсене кӑна тӗрӗслет.

Ҫӗнӗ правилӑсен хушӑмӗ те пур, унта тӗрӗслев ирттернӗ чухне хӑш-пӗр машинӑна мӗне пӑхӑнса тӗрӗслемеллине палӑртнӑ.

## Асӑрхайман – таптанӑ

Шупашкар район прокуратури Ҫӗрпӳ районӗнче пурӑнакан 20 ҫулти гражданина уголовлӑ майпа айӑпланӑ. Следстви палӑртнӑ тӑрӑх - иртнӗ ҫулхи чӳк уйӑхӗнче "Мускав-Ӗпхӳ" ҫул ҫинче "ВАЗ-21093" автоммашинӑпа пынӑ чухне вӑл ҫул урӑ каҫакан хӗрарӑма таптанӑ.

Хӗрарӑм вырӑнтах вилнӗ.

Ҫамрӑк водитель айӑпне йышӑннӑ, уголовлӑ ӗҫе уйрӑм йӗркепе пӑхса тухма ыйтнӑ.

Ӑна хирӗҫ пуҫарнӑ ӗҫ часах суда ҫитӗ.

## Харӑсах – виҫҫӗн

Пӗр ҫемьерен харӑсах виҫӗ ҫыннӑн пурнӑҫӗ вӑхӑтсӑр татӑлнӑ кӑҫалхи кӑрлачӑн 17-мӗшӗнче Ҫӗрпӳ районӗнчи автоҫул ҫинче ("Ҫӗрпӳ-Ульяновск" трасса ҫинчи Ҫӗрпӳел ялӗ ҫывӑхӗнче). ВАЗ-2110 автомашинӑра ларса пынӑ вӗсем: хӗрӗх пӗр ҫулти кил хуҫи, хӗрӗхри мӑшӑрӗ тата вӗсен ҫирӗм ҫулти хӗрӗ. Темиҫе вилӗмпе вӗҫленнӗ инкек ирхине сакӑр сехет тӗлнеллех пулса иртнӗ. 22 ҫулти водитель автомобиль рульне ҫирӗп тытса пыраймасран хирӗҫ килекен автотранспорт ҫулӗ ҫине кӗрсе кайнӑ, ют ҫӗршывра туса кӑларнӑ машинӑпа ҫапӑннӑ. Автомашина водителӗ тата салонра ларса пынӑ 20 ҫулти тепӗр хӗр суранланнӑ. Хӗрӗн сывлӑхӗ ҫав тери япӑх.

Икккӗмӗш автомашинӑри икӗ ҫынна та аманнине кура пульницана ӑсатма тивнӗ.

## Эрехпе туслашсан

Ӳсӗрле руль умне ларас йӑлана пӗтерме ҫав тери йывӑр. Тарӑна кайнӑ ун тымарӗ. Нарколог патӗнче шутра тӑни те нимӗн те мар теприншӗн, ҫил пек вӗҫтерет машинипе ҫул ҫинче. Акӑ Ҫӗрпӳ район прокуратури ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑхӗн саккунне епле пӑхӑннине тӗрӗсленӗ. Хӗрӗх тӑххӑрти гражданин эрех-сӑрапа айкашса чире кайнисене сиплекен тухтӑр патӗнче шутланса тӑнӑ (2008 ҫултанпа), вӑл чирлине диагнозпа ҫирӗплетнӗ. Медицина кӑтартӑвӗсемпе (РФ правительствин постановленийӗпе килӗшӳллӗн ) ун пек чирпе автомашинӑпа ҫӳреме юрамасть. Ҫӗрпӳ район ҫыннине ҫакна пӑхмасӑрах "АВС" категориллӗ транспорт хатӗрӗсемпе ҫӳреме ирӗк парса водитель удостоверенийӗ тыттарнӑ.

Вырӑнти прокурор ӑна руль умне ларассинчен хӑтарма ыйтса суда хут тӑратнӑ. Капла тумасан ҫул ҫинче вӑл инкек кӑтартасси куҫ кӗрет-ҫке. Суд прокурор тавӑҫне тивӗҫтернӗ.

## Арӑмӗ ҫине пырса кӗнӗ

Пӗлтӗрхи ҫу варринче Шупашкар районӗнчи Сарапакасси ял тӑрӑхӗн депутачӗ пулнӑскер (коммерци организацине ертсе пыраканскер) мӑшӑрӗпе пӗлӗшӗсен туйӗнче савӑннӑ. Савӑнӑҫ нумая пыман ҫав, арӑмӗ упӑшкине ытлашши ӗҫнӗшӗн ӳпкелеме тытӑннӑ. Ара, лешӗ уява автомашинӑпа килнӗ-ҫке, ҫавӑнпа пӑшӑрханма сӑлтав тупӑннӑ. Урама тухсан арҫын автомашина рулӗ умне хӑех кӗрсе ларнӑ. Ларнӑ та кӑшт тапрансанах тӗлӗрме пуҫланӑ. Ҫав вӑхӑтра хӑйне кафе тӗлӗнче кӗтсе тӑракан мӑшӑрӗпе унӑн тантӑшӗ ҫине кӗрсе кайнӑ.

32 ҫулти арҫын РФ УК 264-мӗш статйин 2-мӗш пайӗпе айӑпланать. Юлашки сӑмаха суд татса парӗ.

# Ҫул пӗлмен ҫын валли ҫул нумай

Иртнӗ ҫул республикӑри ҫулсем ҫинче **2046** инкек пулнӑ, **253** ҫын вилнӗ. Ҫак шутран **135**-ӗшӗн пурнӑҫӗ вырӑнтах татӑлнӑ, урӑхла каласан, васкавлӑ медицина пулӑшӑвӗ килсе ҫитиччен. Ыттисем пульницасенче куҫ хупнӑ.

Ку кӑтартусемпе ЧР Шалти ӗҫсен министерствин хӑрушсӑрлӑх инспекцийӗн управленийӗ пресс-конференцире паллаштарнӑ.

Ҫул ҫинчи инкексемшӗн ытларах чухне водительсем айӑплӑ: хирӗҫ килекен автомашинӑсен ҫулӗ ҫине кӗрсе каяҫҫӗ, пӑрӑнкӑҫсенчен тӗрӗс мар иртеҫҫӗ, хӑвӑртлӑха ӳстерсе ҫӗ тата ытти те.

Ачасем хутшӑннипе **248** инкек сиксе тухнӑ, **106** тӗслӗхре – ача ашшӗ-амӑшӗ ҫумрах чухне.

Ӳсӗр водительсен ҫӑмӑлттайлӑхӗ яланхиллех кулянтарать. Пӗлтӗр вӗсен айӑпӗпе ҫулсем ҫинче **15** ҫын вилнӗ, **224** аманнӑ (**154** аварире). **60** водитель руль умне урӑ пуҫпа ларманнине палӑртнӑ, анчах вӗсем медицина учрежденийӗнче тӗрӗсленме килӗшмен. Ҫакӑн пеккисен айӑпӗпе **83** ҫын инкек тӳснӗ.

Пӗлтӗр водительсене 304 млн та 490 пин те 677 тенкӗлӗх штрафланӑ, 73 процентне кӑна шыраса илнӗ. Питех те инкеклӗ вырӑнсенче фотохатӗрсем вырнаҫтарни лару-тӑрӑва аванлатма пулӑшнӑ.

Республикӑра автотранспорт шучӗ ӳсет. Иртнӗ ҫул **25 пине** яхӑн хушӑннӑ. Ҫакна кура ҫул-йӗр хӑрушсӑрлӑхне тытса пыракан инспекторсен ӗҫӗ те, яваплӑхӗ те ӳсет.



Кӑларӑма Ирина НИКИТИНА хатӗрленӗ.

# Çур ĕмĕр пĕрле

Кампа çўç шуратнă, çавăнпа пурнăç ирттермеллине теççĕ ватăсем. Етĕрне районĕнчи Килтĕш ялĕнчи Николай Марковичпа Галина Михайловна Марковсем кун-çул сукмакĕпе 55 çул пĕрле утаççĕ. Хуйха-суйха та, савăнăça та пĕрлех пайланă вĕсем. Ачи-пăчине ура çине тăратнă, сад ĕрчетнĕ, кил-çурт çавăрнă. Ĕçчен, маттур çемьене ялйыш та кăмăллать.

1958 çулта, хĕсметрен таврăннă хыççăн, Николай пĕр вăхăт Советски ялĕнче ĕçленĕ. Шăпах çаканта тĕл пулнă вăл турă çырнине. Галина ун чухне участок больницинче санитаркăра вăй хунă. Каччă ăна пĕрре курсах килĕштернĕ. Çулталăк туслă çўренĕ хыççăн çамрăксем çемье çавăрнă. Çавăнтанпах Марковсем пĕрпĕрне хисеплесе, юратса пурăнаççĕ.

Николай Маркович ĕмĕрĕпех «Дружба» хуçалăхра диспетчерта, инженерта ĕçленĕ. Тивĕçлĕ канăва тухнă пулин те вăл алă усса ларма пултараймасть, общество ĕçне хастар хутшăнать. Ахальтен мар ĕнтĕ чылай çул суйлав комиссийĕн членĕнче вăй хурать. А.Иванова ячĕллĕ урамра шыв башнине пăхса тăрассишĕн те явапллă. Арçын хăйĕн тивĕçне тўрĕ кăмăлпа пурнăçлать. Çавăнпах ĕнтĕ кунта шыв тĕлĕшпе чăрмав çук. Галина Михайловна колхозра повара ĕçленĕ. Марковсем яланах картиш тулли выльăхчĕрлĕх усранă.

Çемьере икĕ ача çитĕннĕ, Зинаидăпа Евгений. Халĕ вĕсем те кил-çуртлă, ача-пăчаллă, мăнуклă.

Ылтăн туя пухăннă тус-тăванĕ, ачисем Марковсене сывлăх, телей, канлĕ ватлăх суннă. Тĕрĕс воспитани панăшăн мăнукĕсем Николай Марковичпа Галина Михайловнăна тав тунă. Çуллахи вăхăтра вĕсем час-часах ялта хăналаннă. Ял пурнăçне хăнăхни каярахпа хĕсметре те пулăшнă.

Хăна-вĕрле ытларах кил хуçине ырланă. Вăл ылтăн алăллă пулни урамранах палăрать. Тĕреклĕ кил-çурта, пĕтĕм хуралтăна çĕнетсе анлăлатнă, пахчара кану вырăнĕ пур. Мăшăрĕ те маттур. Апатçимĕçе унран тутлăрах пĕçерекен таврара та çук! Вăл кил-çурта тирпей-илем кĕртессишĕн тăрăшать.

Пĕрне мухтаса теприне хурлама кирлĕ мар. Иккĕшĕ те ĕçчен, хастар. Çамрăксен вĕсенчен вĕренмелли пурах.

# Чăваш тĕрри илемлĕ

Республикăри Халăх пултарулăх çуртĕнчи «6х7» галерейăра Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Çемье вулав центрĕ çумĕнче йĕркеленнĕ «Тĕрĕ тĕнчи» клуба çўрекенсен ĕçĕсемпе курав уçăлнă.

Асăннă клуб 2009 çулта йĕркеленнĕ. Ăна ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Раççей халăх ăсти Валентина Минеева пуçарса янă. Халĕ Надежда Кузнецова ертсе пырать. Кунта шкул ачисем те, пенсионерсем те кăмăлласах çўреççĕ. Хăйсен ĕçĕсемпе тĕрлĕ курава хутшăнаççĕ вĕсем, малти вырăнсене йышăнаççĕ.

Тĕрĕ ăстисем çулсеренех пултарулăхне, тавра курăмне ўстерме тăрăшаççĕ. Çавна май культура, ăслăлăх ĕçченĕсемпе тĕл пулаççĕ. Професси тĕлĕшĕнчен вĕсене Раççей халăх промыслин ăсти, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Евгения Жачева пулăшса пырать.

Курава чăваш тĕррипе илемлетнĕ ал шăллисем, тутăрсем, капăр тумсем, масмаксем, сĕтел çиттисемпе салфеткăсем тăратнă.

# Уявра тăван юрă-кĕвĕ шăранать

«Ĕçлеме ўркенмен çын пурăнатех», – тет Татьяна Теплова. Ларма-тăма хăнăхманскер пилĕк хĕрне те ачаранах ĕçе хăнăхтарнă вăл. Паян кĕçĕннисем амăшне пулăшаççĕ, аслисем вара – хулара.

Елчĕкри «Сельхозтехника» çурчĕ чылай çул хуçасăр ларнăран юхăннă, ишĕлнĕ. Иртен-çўрене тискеррĕн курăннă. Паян вара çаканта «Мечта» кафе ĕçлет. «Çурта аукцион урлă туянтăмăр, – кăмăллăн калаçать Татьяна Николаевна. – Малтан çав тери хăрушăччĕ кунта. Юсаса çĕнетессе те шанмарăмăр. «Куç хăрать те алă тăвать» тенешкел ĕçе пуçăнтăмăр. Çур çул хушшинче кафе уçма пултартăмăр. Районти суд ĕçченĕсем Çĕнĕ çула шăпах çаканта кĕтсе илчĕç».



Раштав типпи тухсан кафене савăнăçлă лару-тăрура уçнă вĕсем. Ку тĕлĕшпе Елчĕк тăрăхĕнчи халăх турă уявĕсене питĕ çирĕп тытса пырать. Типĕре ĕçкĕ-çикĕпе аппаланакан çук.

Чи малтанах залра юбилей кĕрленĕ. Çакнашкал уявсем малашне те пулаççех. Акă нарăс уйăхĕнче туйсемпе менелниксем черетленсе пынине пĕлтерчĕ вăл. 130 вырăнлă пўлĕмре ятарлă каçсем те йĕркелĕç. Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче те çын туллиех. Кафе çул çинче вырнаçнăран кĕрсе тухма питĕ меллĕ. Унсăр пуçне поварсем те апат-çимĕçе тутлă хатĕрлеççĕ. Ку енĕпе вĕсен ĕç опычĕ пысăк.

Малашне чăваш апат-çимĕçĕ те пулĕ. Çавăн пекех чăваш туйне йĕркелес ĕмĕтсем те пур. «Стена çине çакма тĕртнĕ ал шăлли те чылай килте, чăваш тумĕ те хатĕр, – малалла тăсăлать сăмах çăмхи. – Çамрăк мăшăра çăкăр тăварпа пилленинчен хакли мĕн пур? Уявра тăван юрă-кĕвĕ шăранни мĕне тăрать!»

Татьяна Николаевна асăннă районти Элекçей Тимеш ялĕнче çуралса ўснĕ. Николай Никоноровичпа Людмила Константиновна Никитинсен виççĕмĕш ачи. Пиччĕшĕ-шăллĕсемпе пĕрле арçын ача пек хастар çитĕннĕ вăл. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна тепĕр чухне «арçури» тенĕ. Ачаллах мотоциклпа çўренĕ, çăмăл машина рулĕ умне ларнă. Халĕ те «тимĕр урхамахне» алран ямасть.

Шкултан вĕренсе тухнă хыççăн малалла пĕлў илменнишĕн пăшăрханать вăл паян. Çамрăклах Патреккел каччипе Илья Тепловпа мăшăрланнă, ача-пăча çуратса ўстернĕ, кил-çурт çавăрнă. «90-мĕш çулсенче виçĕ ĕне тытрăмăр, – аса илет иртнине маттур хĕрарăм. – Унсăр пуçне пĕр гектар çĕр пурччĕ. Ун чухне 3-4 сехетрен ытла çывăрса курман эпĕ. Пĕрремĕш машинăна («шестеркăччĕ») сухан сутса туянтăмăр. Ачасене те канăç паман, ĕçлеттернĕ. Вĕсем çитĕннĕ май килтен вĕçсе тухса кайрĕç. Çавна май пĕр гектар çĕр çине пахча çимĕç мар, 200 ытла улмуççи лартрăмăр. Халĕ кашни çуркунне шап-шурă чечеке лараççĕ вĕсем. Кĕркунне вара çимĕçĕпе савăнтараççĕ. Хамăр çеç мар, ял çынни те тăранать. Эпĕ – горсскоппа çĕр çынни. Çак ĕç питĕ килĕшет мана».

Ятарлă професси илме тўр килмен пулин те ăна пурнăç тĕрлĕ ĕçе вĕрентнĕ, хăнăхтарнă. Пур енĕпе те пултарулла вăл. Лайăх ертўçĕ те, юратнă амăшĕ те. Шел, мăшăрĕ вăхăтсăр пурнăçран уйрăлнă.

«Ытларах ĕçленĕрен тепĕр чух хама вăрçатăп, – тет Татьяна Николаевна. – Анчах халь тин урăхла пулма пултараймастăп. Ĕç – пурнăç тыткăчи маншăн».

**«Мечта» кафере туй-çуй е уяв ирттерес кăмăллисен çак телефонпа шăнкăравламалла: 8-937-015-72-62.**

# Пурнăç таппинчен юлмасть

Выла юхан шывăн пĕр юппи Хĕрлĕ Чутай районĕнчи çухрăма тăсăлакан Чурпай ялĕн урамне икке пайлать. Шăп ял варринче Василий Иванов фронтовикăн кирпĕч çурчĕ вырнаçнă. Шел те, вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухнăскер нумаях пурăнайман. Суранĕсене пула 34 çултах çĕре кĕнĕ. Мăшăрĕпе вĕсем пилĕк ача çуратнă. Ирина Григорьевна тĕпренчĕкĕсене пĕчченех çитĕнтернĕ.

– Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче анне тимĕр урапаллă «Фордзон» тракторпа уй-хирте ĕçленĕ. Пĕчĕк кĕлеткеллĕ, хитре сăн-питлĕ, сăпайлă хĕре атте ахальтен килĕштермен ĕнтĕ. Кил-çурта çĕнетме аннене эпĕ те нумай пулăшрăм. Штанашри вăтам шкулта вĕреннĕ çулсенче, çуллахи каникул вăхăтĕнче, Çĕмĕрлери кирпĕч заводĕнче виçĕ çул вăй хутăм. Шкултан вĕренсе тухсан тепĕр икĕ çул «Киров вăрманĕ» хуçалăхра ĕçлерĕм. Унтан çурт валли хыр пĕренесем кўрсе килтĕм. Çав çулах строительство ĕçĕсем пуçланчĕç. Тепĕр çул вара пирĕн çемье çĕнĕ пўрте пурăнма куçрĕ, – пĕлтерет Нина Васильевна, Ивановсен виççĕмĕш хĕрĕ.

Нина Шĕмшеш каччипе Константин Ивановпа пĕрлешнĕ. 40 çул туслă, пĕрпĕрне хисеплесе пурăннă вĕсем. Икĕ ача çуратса ўстернĕ. Шел те, мăшăрĕн кунçулĕ кĕске пулнă.

Нина Васильевна пĕлтĕр 60 çул тултарчĕ. Тивĕçлĕ канура пулин те ĕççĕр лармасть: выльăх-чĕрлĕх чылай усрать. Хаçат-журнал вулама та кăмăллать. Пĕр сăмахпа каласан, пурнăç таппинчен юлмасть.

Вăл чылай çул вырăнти хуçалăхра дояркăра вăй хунă. Ĕне сăвакансен ăмăртăвĕсенче пĕрре кăна мар малти вырăна тухнă, тĕрлĕ Хисеп хутне тивĕçнĕ. Вĕсене паян та асăнмалăх упраса пурăнать.

Халĕ Нина Иванова çуралнă тăрăхран вунă çухрăмра пурăнать пулин те хăй вăйĕпе çĕкленĕ кирпĕч çурта çулсеренех çитсе курма тăрăшать.

**Геннадий САВЕЛЬЕВ.**

**Кăларăма Валентина ПЕТРОВА хатĕрленĕ.**

# Суя – çур пурнăç-ши?

Социологсем каланă тăрăх – хĕрарăм арçынран сахалрах улталать. Утмăл çул ытларах пурăнакансем пĕр-пĕрне пурнăç тăршшĕнче 88 пин хутчен суйнине пĕлтереççĕ Британи ăсчахĕсем. Çулталăкра вĕсем вăтамран 1466 хутчен (кунне 4 хут) шăнман пăр çине лартса яраççĕ. Арçын кунне – пилĕк, хĕрарăм виçĕ хут улталать.




Чи анлă сарăлнă суя каларăш – «Пурте йĕркеллĕ». «Ĕç-пуç еплерех?» тени те çак шута кĕрет. Мĕншĕн тесен ыйтакана сан ĕç-пуçу пачах та кăсăклантармасть. Пурнăç йывăр пулсан та çынна савăнтарас мар тесе чылай чухне «пурте йĕркеллĕ» тесе хуравлатпăр.

Суя каларăшсен рейтингĕнче «Сана курма хавас!» тени иккĕмĕш вырăн йышăнать. Чăн та, сана курнишĕн савăнакан сахал. Ытларах çыншăн ик айкки те тăвайкки. Виççĕмĕшĕсем вара сана пачах та кураймаççĕ. Çапах та илемлĕ калаçма пĕлеççĕ.

«Эсĕ паян çав тери хитре» е «Сана ку тум питĕ килĕшет» тени те тĕрĕслĕхрен аякра тăрать. Мĕншĕн тесен чылайăшне кам мĕн тăхăнни пачах кăсăклантармасть.

Тĕпчевçĕсем рейтинг варрине виртуаллă ултава вырнаçтарнă. Сăмахран, эсир пĕр-пĕр фирмăна шăнкăравлатăр. Автоответчик: «Сирĕн шăнкăрав пире çав тери кирлĕ. Линирех юлма тăрăшăр», – тет.

«Чăннипе вара граждансене йышăнакан менеджер хăйне чăрмантарасран автомат хатĕрĕпе усă курать», – теççĕ ăсчахсем.

Вулавăш

## Лев КАДКИН

# Кăшелейкка хĕрринче

### Калав

Çăл тапса тăрать тĕпĕнче, çавăнпа яланах юшкăн çăрăлать талккăшпех. Пире аслисем çав вырăна çывхарма та хушмаççĕ.

Тепĕр чухне, вĕсен сăмахне хăлхана чикмесĕр, унта юриех кайса пăхни те пулман мар. Куç кĕски пекех яка та тикĕс курăнать шыв сийĕ. Чул татки вăркăнтаратăн та, вăл кăштах выртать, унтан путса анса каять. Аялтан тапса тăракан шыв сикки шурлăхлантарса тăрать çав вырăна – акă ăçта вăрттăнлăхĕ. Пĕррехинче унта ĕне анса кайнăччĕ. Юрать кĕтӳçĕ вăхăтра сиснĕ, çийĕнчех яла çĕкленĕ. Арçынсем аран-аран туртса кăларнă мĕскĕн выльăха. Çапласкер вăл пирĕн Кăшелейкка.

Кунта вара вăрман выльăхĕ аташса пырса кĕчĕ. Эх, ăнчĕ Кульккапа иксĕмĕрĕн. Авăн уйăхĕнче шкула кайсан юлташсене каласа памалли мĕн чухлĕ! Класра чи лайăх калав та манăн пулĕ.

Хайхи сăнатпăр пăшие. Вăл йăлтах пăшăхса, шывшăн касăхса çитнĕ. Шыв тутине туйнă та çырма хĕрне çывхарчĕ. Сасартăк асăрханса пуçне çĕклерĕ. Çил темĕнле хăрушлăх пуррине систерчĕ пулинех ăна. Анчах ĕçес килни унăн сисĕмне чакарчĕ курăнать. Пăши сасартăк çулне улăштарчĕ те чăнкă çыр хĕрнех пырса тăчĕ, анчах анаймарĕ. Унăн кăштах каялла чакма тиврĕ. Тата кăштахран вăл сакăлтара курăнми пулчĕ.

– Кайса пăхар-и пăши шыв ĕçнине? – сĕнчĕ шăллăм.

Хамăн та тăрса чупас кăмăл тăкăнас пек. Нихçан курманни-ĕмĕтленменни-çке. Тен пурнăçра кунашкалли урăхран пулмĕ те. Шăпа паян пире савăнăç парнелет.

Вĕçтертĕмĕр пăши хыççăн. Кĕтӳ саланса каясран та хăрама пĕлмерĕмĕр. Тутă-ха ĕнесем, халех çĕкленес çук тапăртан. Нумай тăмастпăр эпир, каялла таврăнатпăр.

Çыран хĕррине хăвăртах чупса çитрĕмĕр. Пăши самаях кайма ĕлкĕрнĕ. Халĕ вăл хăвалăх хушшипе майĕпен, темĕнле киленĕçлĕн темелле, вашкăртса пыратчĕ. Çивĕч хăлхаллă та пит сисĕмлĕскер пирĕн ура сассине тӳрех илтрĕ. Тăп! чарăнса тăчĕ. Эпир сывлама пăрахрăмăр: хăратас марччĕ вăрман патшине, тапса ан сиктĕрччĕ ют сасса илтсе. Телее, эпир уншăн чăнах хăрушă мар иккенне ăнланчĕ те хăвăртлăхне чакармасăр малалла утса кайрĕ. Çак вырăнта ĕçме чарăнасшăнччĕ пулас. Анчах тем амакĕ, йытă-ши е пĕр-пĕр тискер кайăк, сиксе тухрĕ те шартах сиктерчĕ ăна. Пăши тем вăхăтра çул юппине улăштарса малалла тапса сикрĕ. Ăçталла каймаллине тӳрех ăнкараймасăр шăп та лăп çăрăлса тăракан чи хăрушă вырăна пырса тухрĕ. "Ан чуп унталла, шурлăхлăшасчĕ пăшие. Анчах пирĕн алăра кĕске пушăсăр пуçне урăх нимĕн те çук. Мĕн тума пĕлейĕпĕр эпир?

– Кулькка, вĕçтер ялалла. Кама куратăн, тӳрех çавна пăши инкеке лекнине пĕлтер. Кăшелейккăра путать те. Ăнлантăн-и?

– Ăнлантăм, пĕчĕк ача-им? – мăкăртатса илчĕ улттăри шăллăм. Вăл манран тăватă çул кĕçĕн. Вара ялалла чавтарчĕ. Çула татса йывăç-çатра хушшипе вĕçтерет. Ура тупанĕ кăна курăнса пырать маттурккан.

Пурнăçшăн тем пекех кĕрешекен пăшие тепĕр хутчен пăхса илтĕм те кĕтӳ патне хыпалантăм. Унта тем пысăкăш икĕ кӳсек выртнине паçăрах асăрханăччĕ. Çавсене йăтса килес. Пăши хырăмĕ айне хума юравлă, тен.

Таврăннă çĕре пăши тата тарăнрах путнине куртăм. Халĕ вăл ман çине темĕнле йăлăнса тата тилмĕрсе пăхрĕ. "Хăтар мана, хăтар", – терĕ пуль.

Туять, мăнтарăн, инкекĕ калама çук пысăккине. Ăна шурлăх çăтнăçем çăтать. Асăрханса çывхартăм та кӳсеке хырăмĕ айне пăрахрăм. Тепĕрне икĕ ури айне хурас тесе меслетлентĕм. Анчах ку кĕскерех иккен. Мĕн тумалла? Вара хулăн патак тупса килсе унпа кӳсеке пăши айнелле тĕртрĕм. Пулăшайрăм-ши мĕн чухлĕ те пулсан? Пĕлместĕп. Ял çыннисем килессе кĕтетĕп халь. Пĕччен эпĕ нимех те тăваяс çук.

Кĕрнеклĕ те илемлĕ вăрман патши çине пăхатăп та куççульпех йĕретĕп. Пăши куçĕнчен те çап-çутă куççуль тумлăмĕсем юхаççĕ. Ăна хĕрхеннипе манăн чĕре хĕссе-хĕссе килет. Иксĕмĕр те йĕретпĕр. Хăвăртрах килĕр-ха, çынсем, пăшие хăтарма, васкарах чупăрсам! Çынсем чупса килессе ĕненетĕп эпĕ. Килеççех! Кулькка вăл çивĕчскер. Халăха ура çине тăрататех. Ахальтен-и манпа пĕрле кĕтӳ кĕтме аттепе анне шанаççĕ ăна. Хăвăртрах! Хăвăртрах!

– Эй, ăçта эсир? – аякранах илтĕнчĕ кăшкăрни.

– Кунта! Кунта эпир! Хăвăртрах килĕр!

Ял конюхĕ Ваççа тете чупса çитрĕ иккен. Аллине туртă тытнă. Эпĕ ăна пăши çине тĕллесе кăтартатăп.

– Ваççа тете, пăши йĕрет, – тетĕп хам та сăмсана нăшăклаттарса.

– Кам йĕрет тен?

– Пăши йĕрет. Авă куççулĕ епле тумлать.

– Кунта йĕме мар, тем тăвăн. Мĕн чухлĕ выльăх пĕтрĕ çакăнта эп ас тăвасса. Тыт-ха тилхепе вĕçне, тăсса кай. Кӳсек пăрахса тĕрĕс тунă-ха эс. Пăшие тилхепепе çаклатса туртма тивет.

Ваççа тете васкавлăн хăва касма пуçларĕ. Кĕçех тата иккĕн чупса çитрĕç. Хăвана ытамĕ-ытамĕпе пăши путакан вырăна пăрахса тултарчĕç. Унтан пĕр тилхепене пăши мăйĕнчен çаклатрĕç, тепринпе хыçалтан çавăрса илчĕç. Хăйсем те шурлăха путса анса кайманни кăна ĕнтĕ – тăр пылчăк.

– Пĕрре! Иккĕ! Виççĕ! Туртрăмăр! Тепĕр хут! Тата тепре!

Атя, хăв та туртăн!

Анчах пăши вырăнтан та хускалаймасть. Туртăнса та пăхать, мĕскĕн, çапах хускану тăваймасть.

Пулăшакансем татах килсе çитрĕç. Пăхса тăракан та пур. Ачасем нумаййăн чупса килчĕç. Ялта пурте пăши путма пуçлани çинчен илтнĕ пулас. Маттур, Кулькка! Эпĕ шăллăма юратса хам çума чăмăртатăп. Ваççа тете командир пекех пĕтĕм ĕçе йĕркелесе пычĕ.

– Тата тепĕр пăявпа çаклатар-ха, ак çакăнтан, хырăмĕ айĕнчен! Атя, туртрăмăр!

Ваççа тете шăллăмпа ман çине йăпăрт пăхса илет.

– Ан йĕрĕр ĕнтĕ, кăларатпăр. Çакăн чухлĕ халăхпа та çăлмасан вара!

– Пуçĕнчен туртмалла ăна, пуçĕнчен, – мăкăлтатать яланах ӳсĕр çӳрекен Мирун тете.

– Эс, Мирун, ура айне ан кĕр-ха, – чарать ăна Ваççа тете. – Туртрăмăр тепре! Тата тепре!

Таçтан Спатюк аппа сиксе тухрĕ. Çуйхашать кăна:

– Мĕн шеллетĕр вăрман выльăхне? Какай тумалла ăна. Тыт, Мирун, пуртă. Пар та пĕрре çамкинчен, ĕçĕ те пĕтрĕ, – янрашать вăл.

Çынсем çухалса кайнă пек пулчĕç. Мирун тете халăха сирсе инке умне пырса тăчĕ:

– Эс кам вырăнне хуран мана, Спатюк? Манран кулатăн-и? – юнарĕ хайхискере. – Асап куракан выльăха вĕлерттересшĕн-и? Çухал кунтан!

Спатюк аппа хăйĕн хутне кĕрекен пулманран çыран хĕррипе вĕçтерчĕ.

– Тепре туртар! – кăшкăрчĕ Ваççа тете. – Пĕрре, иккĕ...

Пысăк тушкаллă йывăр пăшие туртса кăларчĕç çапла. Урипе хытă вырăна туйсан вăл вăйсăррăн силленчĕ. Тарса кайма васкамарĕ. Тăватă урипе те сарлакан пусса канса илчĕ, йĕри-тавра хăйне хупăрласа тăракансем çине тĕтреллĕ куçпа тинкерчĕ.

– Шыв парас! – тавçăрчĕ тахăшĕ.

Çавăнтах умне витрепе шыв пырса лартрĕç. Пăши чĕлхине çулласа илчĕ, анчах ĕçмерĕ. Ман тем пекех ăна аякĕнчен ачашлас килчĕ, анчах хăяймарăм. Вăрман пăшийĕ-çке вăл, кил выльăхĕ мар. Çапах ăна пулăшмалли ĕç тупрăм хам валли. Тахăшĕн аллинчи витрене илтĕм те пăши çумне çыпăçнă пылчăка сăтăрса пăрахрăм.

– Çын аллинчи шыва ĕçмест вăл. Хăнăхман. Хăварар та пĕччен, хăйĕнне хăех пĕлĕ, – терĕ пурне те хăвăрт тавçăракан Ваççа тете.

Халăх сирĕлчĕ. Пăшие те вăй кĕрсе çитрĕ пулас. Чĕтреме чарăнчĕ. Пуçĕ çӳлелле çĕкленчĕ. Урине хускатрĕ. Вара вăйсăррăн ярса пусса утса кайрĕ. Чылайччен пăхса тăрса ăсатрăмăр ăна.

– Тав турра, çăлăнчĕ, – терĕ Ваççа тете. – Çак ачасем пулман тăк пĕтетчĕ. Маттур!

– Эпĕ те туртса кăларма пулăшрăм, эпĕ те, – каппайланасшăн пулчĕ Мирун тете.

– Эсĕ те пулăшрăн, – сивлемерĕ Ваççа тете.

Тинкерсе-тинкерсе пăхрăм та пăши вĕтлĕх çывăхĕнче чарăнса тăнине асăрхарăм. Вăл пирĕн еннелле пăхать. Тата кăштахран вăрманалла кĕрсе çухалчĕ.

Халăх та саланчĕ.

– Кĕтӳ улма çине кĕрсе кайнă, эй! – кăшкăрчĕ тахăшĕ.

Эпир Кульккапа иксĕмĕр касăвалла çил пек чавтартăмăр.

Пирĕн тăрăхра чылай çул ĕнтĕ хак ытла пысăккипе кĕтӳçĕ тытмаççĕ. Кашни кил черетпе кĕтет ял кĕтĕвне. Касу теççĕ ăна. Выльăх-чĕрлĕх тытаканăн ĕç нумайййине эпир те, ачасем, лайăх пĕлетпĕр. Пирĕн аттепе аннен те. Эпир хаваспах пултарнă таран пулăшатпăр вĕсене. Выльăха хĕлле те, çулла та – пĕрмаях пăхмалла. Хĕлле утă-улăм антарса памалла, ай сарăмне тасатмалла. Çуллахи вăхăтра вара апатлантарма улăха-çарана, çырма-çатрана илсе тухма тивет. Кĕтĕвне те черетпе хамăрах кĕтетпĕр.

Вăхăт кĕр енне кайнă, çапах çанталăк лăпкă та шăрăх. Пирĕн кун çитрĕ. Вĕт ура кассине мĕн кирлĕ? Ĕççĕр яртлатса чупиччен атте-аннене усă кӳрес. Шăллăмпа иксĕмĕре пире хирте пĕртте кичем мар. Курăк аванран ĕнесем лайăх çиеççĕ, пăрушкасем те чупса тарăхтармаççĕ. Сурăхсем кĕтӳрен ниçта та хăпмаççĕ, ĕнесен çумĕнчех йăрăлтатаççĕ. Çу пуçламăшĕнчех канăç сахалччĕ: ун чухне хир уçăлманччĕ-ха, курăк лутра та сайраччĕ. Апат чухăнран шав утатчĕç выльăхсем. Тырă çине кĕрсе каясран та сыхламаллаччĕ.

Хĕвел тӳпене хăпарса çитрĕ. Эпир кĕтĕве тапăра антартăмăр. Çисе-ĕçсе тăраннă выльăх лăпкăн кавлет. Пăчă. Çитменнине шăна-пăван çиет. Ĕнесем ниçта кайса кĕме пĕлмеççĕ: хӳрипе çапкалашаççĕ, урипе тăпăртатса илеççĕ çыртакансене хăваласа ярас тесе. Лешсем пит сĕмсĕр. Татах та татах килсе сăрăнаççĕ. Юн тухиччен çыртса суранлатаççĕ.

Кĕтӳ тапăрта чухне пире канлĕ. Сурăхсем, авă, шăрăхран çырма пуçне пытаннă. Пăчă вĕсене ăшă кĕрĕкпе. Эпир те сулхăн вырăн тупрăмăр. Малтанах шыва кĕрсе уçăлтăмăр, халĕ, пиншака хамăр ая сарса, улпут пекех тăсăлса выртрăмăр. Пĕри кăтăш пулнă пирĕнтен, тепри кĕтӳ сыхлать. Ылмашăнса канатпăр.

– Тете, тете тетĕп! – алăран туртса вăратрĕ мана шăллăм. – Пăх-ха, пăх.

– Ĕне-и вăл? – ыйăха малалла тăсас килчĕ манăн.

– Ĕне мар-ха вăл. Пăлан пулас.

– Пăлан? Чăнах-и?

Эпĕ хăвăрт кăна тăрса лартăм. Чăнах та, пирĕнтен аякрах та мар, йывăçсем хушшипе, çамрăк ĕне майлă, анчах чылай çӳллĕрех те йăлттамрах выльăх вашкăртса килет.

– Пăлан мар. Пăши ку, пăши! Пăлансем çурçĕрте пурăнаççĕ.

Мăнаçлă, хитре выльăх васкамасăр, чарăна-чарăна тăрса пирĕн пата çывхарнăçем çывхарать. Мĕн тума пĕлес? Кӳршĕ яла пăши аннине калатчĕç-ха пĕр кунах. Анчах пирĕн енче сăмах-юмах тухманччĕ. Кур-ха, хăех килет вĕт. Епле мăнаçлăскер! Епле тĕреклĕ те хитре.

Нумай шухăшласа тăмасăр тĕмеске çинчен вăш-ваш шуса антăмăр. Сывлама пăрахнăн сăнаса выртатпăр. Акă вăл уçă вырăна тухрĕ, чарăнса тăчĕ. Мăшлаттарса сывлани те илтĕнет пек. Мăйне тăсса, хăлхине вылятса тăнласа тăчĕ, шăршă пĕлеслĕн сывлăша тараннăн çăтрĕ. Вăрманта, паллах, пĕр тĕслĕ сывлăш: хыр йывăçĕн лăсси, хурăн, юман, вăрман курăкĕ хăйне евĕр ырă та аван. Кунта вара уçă вырăн: çаран-курăк, шывшур, ĕне выльăх тата ытти шăршă сăмсана кăтăклать.

Хăйĕншĕн нимĕнле хăрушлăх та туймарĕ-ха вăрман выльăхĕ. Вăл, чăнах, çукчĕ хальлĕхе. Малалла та мăнаçлă утăпа утса кайрĕ, кĕçех эпир тапăра антарнă вырăна, çырма хĕррине, тухрĕ. Шывĕ тарăнах мар, сарлакăшне те Кĕтнепе танлаштараймăн. Хăш-пĕр вырăнта тĕпĕ курăнать темелле. Пулă сĕркелесе пăхатпăр тепĕр чухне. Пĕринче самаях тытса таврăннăччĕ Кульккапа иксĕмĕр. Анне пĕр çатма ăшаласа пачĕ.

– Ĕçлесе çиекен пултăр, – терĕ пире хаваслантарса.

Сахал мар пулнă эпир Кăшелей шывĕ хĕрринче. Çавăнпа та хăрамастпăр темелле. Анчах тапăртан 600-700 метр аяккарах вăл йăлт улшăнса каять, авăрланса юхать. Самантрах хăй айне çавăрттарса кĕртсе ярать.

Çуркунне пирĕн юхан шыв Атăл пекех пысăкланса сарăлса çитет. Çыранĕнчен тухса пĕтĕм таврана шыв айне тăвать. Кĕперсемпе каçăсене йăлт шыва ярать, çĕмĕрсе пĕтерет. Лексе пăх-ха авăра – хăтăлаймастăн.

Питех те ултавлă вырăн вăл. Ун пирки ял çыннисем кăна пĕлеççĕ, çич çухрăмран çаврăнса иртеççĕ çав вырăнтан. Шурлăхлă-лачакаллă лаптăк. Пысăках та мар темелле. Сакăлталлă чăнкă çыран çумĕнчен пуçланать. Шывĕ кирек хăçан та – çулла та, хĕлле те – пăр пек сивĕ.

çăтать", – тесе асăрхаттарăттăмăр ăна. Анчах кăшкăрма кая юлнă, выльăх этем чĕлхине ăнланаяс та çук. Çиелтен пăхсан куç кĕски пекех яка та тикĕс курăнакан, малтанласа нимĕнле хăрушлăха та систермен вырăна ярса пуснă-пусман вăл авăр инкекне çакланчĕ. Çӳлелле туртăнчĕ тухасшăн пулса, малти урипе тапăлтатрĕ. Анчах ăна туртса кăларнă тĕле кайри пылчăка путрĕ. Татах та тата малалла талпăнчĕ, пĕтĕм вăйран тăрăшрĕ çăрăлчăкран тухас тесе. Анчах çăлăнăç килес вырăнне инкек пысăкланса пычĕ. Вăрман выльăхĕ куç умĕнчех ултавлă серепене çакланчĕ.

Хăй тĕллĕн тухаяс çук вăл шурлăхран. Çакă тӳрех ăнланмалла пулчĕ. Пу-

**Ентешсем**

# Ялтан – Çурçĕр полюсне

**Ял çынни уттине те çулать, вуттине те çурать, Çурçĕр полюсне те çитсе килет. Унта виçĕ сехет çурă пулнă хушăра шур упасенех курма тӳр килмен Канаш районĕнчи Янкăлч ялĕнче пурăнакан Николай Егорович Николаева, анчах тĕлĕнмелле çул çӳрев çинчен вăл сехечĕ-сехечĕпе каласа пама хатĕр. Инçе çула тухнăранпа кăçалхи ака уйăхĕнче çичĕ çул çитсе пырать. Никама та манман, нимĕн те манăçман. Тепĕр тесен, епле манăн-ха паллă ентешĕ, Раççей паттăрĕ Николай Гаврилов, ĕмĕр асра юлмалла сума сунине? Çурçĕр полюсне çитни кăнтăрта канса килни мар. Ăшă вырăнсенче хĕвелпе хĕртĕннипе паян никама та тĕлĕнтерейĕн. Çурçĕр полюсĕ вара питех те нумай вăрттăнлăх упрать, тĕпчевçĕсемпе ăсчахсене хăйĕн патне туртать те туртать.**



С. Журавлев сăн ӳкерчĕкĕ

## Шухăшланă та çула пуçтараннă

"Пуçтарăн Çурçĕр полюсне,– янăраса кайнă пĕр ирхине телефон кĕпçинче ентешĕн Н.Гавриловăн сасси.– 2007 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче ятарлă экспедици çула тухĕ". "Шухăшласа пăхмалла",– тенĕ пач кĕтмен-туман çĕртен йăтăнса аннă хыпара "чăмласа" çитереймен шкул директорĕ. Паллах, шухăшлама вăхăт панă ăна. Тепĕр темиçе кунтан чи малтан Николай Егорович мар, Николай Гаврилов хăй шăнкăравланă тус-пĕлĕшне. Лешĕ: "Пыратăп", – тени хавхалантарнă.

Ентешĕ çула пуçтарăнмалли япаласенчен кăçатă кăна илме хушнă. Килте Çурçĕре çитме юрăхли тупăнман. Инçене каясси пирки районти вĕренӳ пайĕн пуçлăхне пĕлтернĕ чухне ыйту хăй хальлĕнех татăлнă. "Манăн кăçатă евĕрлĕ атă, урăхла каласан, унты пур", – тенĕ Янкăлч шкулнех пĕтернĕ пуçлăх. Николай Егорович чăваш апачĕпе çула тухнă: шăрттан, пыл, чей куркăк илнĕ. Тăхăнмалли ăшă япаласенчен çăм атăсăр пуçне, чăн та, нимĕн те кирлĕ пулман, пуринпе те тивĕçтернĕ 22 çынран тăнă экскурсие.

Мĕнлерех хастарсем пуçтараннă тата! Раççейре, ун тулашĕнче палăрнă чаплă çынсем хушшине лекнĕ чăваш. Александр Михайлов артистпа пĕр ушкăна лекниех мĕне тăнă! Хăй вăхăтĕнче министр çумĕ пулса ĕçлени те, паллă çул çӳревçĕ ята илни те, Раççейĕн хăрушсăрлăх службин офицерĕсен пуçлăхĕ те, Совет Союзĕн Геройĕ тата ыттисем те юнашар пулнă. Чăвашсенчен ку экспедицие Нефтеюганск хулин мэрĕ пулнă Владимир Семенов та хутшăннă, анчах вăл Николай Егорович пек ялтан çитмен-çке.

## Тĕлĕнсех кăсăкланнă

Янкăлч ялĕн чăвашĕ вара пилĕк талăка пынă çул çӳрев тăршшĕпех курни-илтнипе тĕлĕннĕ. Малтанах Мускавра Николай Гавриловăн ĕç пӳлĕмĕпе, унтан çĕр-шывăн хăрушсăрлăх тытăмĕн музейĕпе паллашнă. Шел те, 1945 çулччен тапхăрпа кăна паллашма, сăн ӳкерчĕксем тума ирĕк панă ăна. Çĕр-шыв хăрушсăрлăхĕпе çыхăннă музейра та ăна пĕччен çӳреттермен, хуралçисем юнашарах тăнă.

"АН-74" çар самолечĕ Нагурск чиккинче чарăнсан кунта служба́ра тăракансем каласа кăтартнине кăсăкланса итленĕ. Экспедици ушкăнĕ киличчен пĕр кун маларах çеç çак вырăнта шурă упасем хуçаланнă-мĕн. Инçетрен пăхма кăна илемлĕ вĕсем, выçă чухне тем çиме хатĕр. Çын е хăватлă техника вĕсемшĕн кăткă вырăнĕнче кăна. 3-3,5 метр çӳллĕш упа пĕрре сиксех 10 метр таран малалла ыткăнать, чĕрни тăршшĕ те 10 см яхăн. Çӳллĕ пăр катрамĕсем хушшинче пытанаканскерсем иккĕ сиксех этеме ярса илме пултараççĕ. Выçă чух нимĕнрен те, никамран та шикленмеççĕ, хаяр та усал. Шур упасенчен хӳтĕленсе чикĕре тăракансем йытăсемпе çӳреççĕ. Йыттисем те упасем пекех мăнă, самăр, çăмламас. "Çумра автомачĕсем те пур. Йыттисем мĕн тума кирлĕ-ши?" – канăç паман ыйту чăваш çыннине. Упа тапăнсан автоматран пеме пулать, анчах кайран сăлтавне ăнлантарма, ĕнентерме çар çыннине йывăр.

Йĕри-тавра – шур пĕркенчĕк. Çул палли çук кунта. Юр тăрăх чупакан "Буран" техникăпа, "Урал" автомашинăпа кăна çул хывма май пур.

Çурçĕр полюсĕнчи "Барнео" станцире Раççейрен çитнĕ йыша кăмăллăн кĕтсе илнĕ. Çанталăкĕ çав кун (ака уйăхĕн 24-мĕшĕ) самай ăшăтнă, сывлăш температури 25 градуса çити чакнă, çил хăвăртлăхĕ те вăйсăрланнă. Хăйне майлă лагерьте тĕрлĕ çĕр-шыв çынни тĕпчев ирттернĕ. Хăшнепĕрне Николай Егорович сăмах хушма та хăтланнă. Лешсем ют чĕлхепе хуравласан çеç чухласа илнĕ вăл çурçĕр тăрăхĕ хăйĕн кăсăклăхĕпе тĕнчери тĕрлĕ халăха пуçтарнине.

Пĕр енчен илсен, çав тери кăсăкланмалли çук та темелле: шап-шурă юр та пăр (2-2,5 метр хулăнăш шăннăскер), хушăран шурă упасем. Тĕпчевçĕсем хальччен пĕлменнипе кăсăкланаççĕ. Çавах та полюсра виçĕ сехет çурă ирттернĕ хушăра ял çыннине уйрăмах Японире туса кăларнă гусеницăллă трактор тĕлĕнтернĕ. Пĕчĕкскер, анчах мĕн тери хăватлă! Ĕçленĕ чух шавĕ пач илтĕнмест. Хăйхине пĕрре чĕртеççĕ те тĕпчев тапхăрĕ вĕçлениччен пĕр чарăнмасăр уйăхĕпех ĕçлеттереççĕ (шартлама сивĕре сӳнтерсе чĕртме çăмăл мар). Кабини те çук тата. Тракторист айккинче ларса пырать. Ахальтен мар çапла-мĕн. Пăр çурăлас тăк тракторист сиксе анса инкекрен хăтăлать.

Çакнашкал техника ялта ытлашши пулĕччĕ-и? Трактор хыркăçĕ бульдозеранни пек – тăршшĕ 1,5 метр.

Техника тенĕрен, Çурçĕр полюсĕнчех юлать вăл, мăнăскере каялла турттарса каймаççĕ: нумай тăкакланмалла. Çуркунне пăр айне каять. Мĕн чухлĕ-ши унашкалли унта?!

## Чăнахах пулнине ĕнентернĕ

Çурçĕр полюсне Николай Николаев "Янкăлч-Мускав-Воркута– Пограничная застава "Нагурская"– Барнео (Çурçĕр полюсĕ)" маршрутпа çитнĕ, каялла вĕçнĕ чух самолет сывлăш çулне улăштарнă: Красноярск облаçĕ урлă вĕçнĕ. Кунти маршрут чарăнăвĕсем те асра юлнă. Пĕр тĕл пулу вăхăтĕнче акă арçынсен ушкăнĕпе паллашнă. Лешсем 1,5 çул хушши çынпа курса калаçман. Куççуль тухнă вĕсен. Экспедици хастарĕсем ӳксе арканнă самолет пайĕсене те курнă. Раççей самолетĕнчен юлнăскерсем иккен. Чуна çӳçентерекен ӳкерчĕк тухса тăнă куç умне...

Хăйсене вĕрентекен шкул директорĕ Çурçĕр полюсне вĕçме хатĕрленни çинчен ачасем малтанах пĕлмен. Николай Егорович таврăнсан та иккĕленнĕ. "Чăнахах çитнĕ-и?" – тесе час-часах ыйтнă. Учитель Çурçĕр полюсне çитнине çирĕплетсе сертификат кăтартнă. Çул çӳрев вăхăтĕнче тунă сăн ӳкерчĕксем нумайăшне пĕлтернĕ.

Николай Николаев, ачасене ОБЖ тата географи предмечĕсене вĕрентнĕскер Çурçĕр полюсне хăçан та пулин çапларах лекесси çинчен шутлама та пултарайман. Янкăлч ялĕнче çуралса ӳснĕ, çар вертолечĕпе вĕçсе "Раççей паттăрĕ" ята тивĕçнĕ Николай Гаврилов аса илсе çула чĕннĕ ентешне. Ниепле те манма пултарайман вăл Николай Егоровича. Тăван тăрăха килсен чи малтанах шкула кĕнĕ паттăр, ачасемпе, вĕрентекенсемпе тĕл пулнă. Николай Егорович пĕр çулхине шкула Гаврилов ятне парас тенĕ, кун пирки паттăра хăйне пĕлтернĕ. Лешĕ малтанах килĕшмен. Ыйтăва иккĕмĕш хут таптарсан кăна ирĕк панă.

Çурçĕр полюсне кайса килнĕ хыççăн шкулта кадет класĕсем йĕркеленнĕ. Николай Егорович инçе çула вĕçес умĕн пĕлтернĕ ку шухăша. Паттăр ентешĕ: "Шухăшлам-ха", – тенĕ. Самолетран ансан шкул ертӳçин пусарăвне ырланă.

Вăтăр тăхăр çул вĕренӳ тытăмĕнче ĕçлет Николай Егорович (5 çула яхăн – ертӳçĕре). Ĕç стажĕ пĕтĕмпе 47 çула çитсе пырать. Хăй юхтарнă пылпа, чейпе хăналарĕ. Чейне Çурçĕр полюсне «çитсе килнĕ» термосран тултарчĕ куркасене. Асра юлчĕ çак самант. Çурçĕр полюсĕ пире те илĕртрĕ. Тен, Сергей Журавлев фотокорреспондентпа иксĕмĕре те пĕрпĕр кун пач кĕтмен çĕртен инçе çул çӳреве йыхравлĕç.

**Ирина НИКИТИНА.**



Н. Николаевăпа Н. Гаврилов (çемье архивĕнчен)

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛ ПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ЛЕТОПИСЬ СТОЛИЦЫ» (6+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
20.45 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.45 «ЛЕТОПИСЬ СТОЛИЦЫ» (6+)

**Ытлари кун, нарăс уйăхĕн 4-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЖЕМЧУЖИНА ЧУВАШИИ» (0+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
20.45 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «КАЧЕСТВО» (12+)

**Юн кун, нарăс уйăхĕн 5-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ÇИТМĔЛ ТЕ ÇИЧЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
20.45 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.45 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)

**Кĕçнерни кун, нарăс уйăхĕн 6-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ПЕХИЛ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)

**Эрне кун, нарăс уйăхĕн 7-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
19.00 «ПОЕТ МЕФОДИЙ ДЕНИСОВ» (0+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «НАОБУМ» (12+)
20.30 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «НАОБУМ» (12+)

**Шăмат кун, нарăс уйăхĕн 8-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ИЛЕМПИ УРОКĔСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
9.00 «ДНИ РОССИЙСКОЙ И ЧУВАШСКОЙ ПЕЧАТИ» (6+)
15.00 «СЕРДЦЕ НА ДВОИХ» (12+)
15.30 «ТВОРЧЕСКИЙ ВЕЧЕР, ПОСВЯЩЕННЫЙ 90-ЛЕТИЮ ЗАСЛУЖЕННОЙ АРТИСТКИ ЧУВАШСКОЙ АССР И РСФСР, НАРОДНОЙ АРТИСТКЕ СССР ВЕРЫ КУЗЬМИНОЙ» (0+)
18.30 «ТĂМ ТИВНĔ ЧЕЧЕКСЕМ». ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔН СПЕКТАКЛĔ (6+)
20.30 «КАÇХИ ТĔЛ ПУЛУ» (12+)

**Вырсарни кун, нарăс уйăхĕн 9-мĕшĕ**
9.00 «ИСТОРИЯ ДАГЕСТАНА В ЛИЦАХ. КНЯЗЬ ГРИГОРИЙ ГАГАРИН НА КАВКАЗЕ» (6+)
10.00 «ОТКРЫТИЕ ГОДА КУЛЬТУРЫ В ЧУВАШИИ» (12+)
15.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
15.30 «ДВИЖЕНИЕ В БЕРЛИНЕ» (12+)
16.30 «АЙГИ-ПАРИЖ». ИЛЕМЛĔ ФИЛЬМ» (6+)
17.30 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
18.00 «ПЕХИЛ» (12+)
18.30 «ИСТОКИ». МЕЖДУНАРОДНЫЙ МУЗЫКАЛЬНЫЙ ЭТНОФЕСТИВАЛЬ (0+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Кăрлач, 29 – юн кун | Кăрлач, 30 – кĕçнерни кун | Кăрлач, 31 – эрне кун | Нарăс, 1 – шăмат кун | Нарăс, 2 – вырсарни кун | Нарăс, 3 – тунти кун | Нарăс, 4 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 8.52 | 8.50 | 8.48 | 8.46 | 8.44 | 8.42 | 8.40 |
| | анать | 17.17 | 17.19 | 17.21 | 17.23 | 17.25 | 17.28 | 17.30 |
| Кун тăршшĕ | | 8.25 | 8.29 | 8.33 | 8.37 | 8.41 | 8.46 | 8.50 |
| УЙĂХ | тăхри | катăлса пырать | катăлса пырать | çĕнĕ уйăх (1.37) | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 28-мĕш кун | 29-мĕш кун | 2-мĕш кун | 3-мĕш кун | 4-мĕш кун | 5-мĕш кун | 6-мĕш кун |
| | | Ту качаки паллинче | Шыв тăкан паллинче | Шыв тăкан паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче | Сурăх паллинче | Сурăх паллинче |

ВĂЙ ПАТĂР!

# Чăваш юрри-ташшипе — Олимпиадăна

**Сочире Олимп вăййисем пуçланиччен шутлă кунсем юлчĕç. Иртнĕ эрнере Чăваш Енри волонтерсен пĕр ушкăнĕ тĕнче ăмăртăвĕн тĕп хулине тухса кайрĕ. Вĕсем – Мускав автомобильпе çул-йĕр институчĕн Шупашкарти филиалĕн студенчĕсем. 26 çамрăк Сочири вокзалсемпе аэропортсенче хăнасене кĕтсе илĕ, спортсменсене ăмăрту вырăнĕсене çитме пулăшĕ, транспорт юхăмне йĕркелĕ. Аслă шкул студенчĕсен тепĕр ушкăнĕ (50 волонтер) Паралимп вăййисене йĕркелеме пулăшĕ.**



Хăнасене вара культура программипе «Çавал» фольклор ансамблĕ савăнтарĕ. Вăл нарăсăн 14-мĕшĕнче çула тухать. Лилия Прокопьева ертÿçĕ каланă тăрăх – асăннă ушкăн куракана чăваш юрри-ташшипе савăнтарĕ. «Олимпийски» паркра тата «Волонтерсен ялĕнче» концерт кăтартĕ. «Программăра чăваш юрри-ташши çеç, – терĕ вăл. – Ытларах юрă-ташăран пухнă кăшăл. Сăмахран, «Тăвансем патне, ай, килсессĕн», «Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать», «Юрлăр кăна, юрлăр теесçĕ», «Кĕçĕр вăйлă çумăр çунă». Купăс, балалайкăсăр пуçне шăкăрмапа та усă курăпăр. Кашни артист аллинче кĕвĕ-çемĕ хатĕрĕ пулĕ. Кунне икшер концерт лартма тивет. Ку тĕлĕшпе халĕ йĕркелÿçĕсемпе телефонпа çыхăнсах тăратпăр. Улшăнусем тупăнсан вĕсем пире систерĕç».

**– Çак чыса тивĕçни савăнтарать, паллах. Халĕ программăпа хĕрсех ĕçлетĕр ĕнтĕ. Сирĕн пултарулăхăра тĕнче шайĕнчи куракан хаклать-çке.**

– Тĕрĕсех. Çавăнпах савăннинчен ытларах хумханатпăр. Пĕтĕм тĕнче умĕнче республика чысне хÿтĕлеме тивет. Пите хĕретес мар, чăваш ятне ярас мар тесе тăрăшатпăр. Ара, Олимпиадăна 140 ытла çĕр-шывран пуçтарăнасса пĕлтерчĕç пире. Савăнăç туйăмĕ концерт хыççăн, куракан алă çупса саламланă чухне çеç «пиçсе çитĕ». Хальлĕхе чунра хумханупăлхану хуçаланать. Пушă вăхăт тупăнсан ăмăртусене кайса курма ĕмĕтленетпĕр.

«Çавал» ушкăн республикăра иртнĕ спартакиадăсенче савăнтарнă: спорт уявĕсене чăваш юрри-кĕввипе илемлетнĕ. Унсăр пуçне «Нарспи» мюзиклпа Самар, Ĕпхÿ, Чĕмпĕр хулисене çитсе килнĕ. Йăхташăмăрсем ăшшăн кĕтсе илнине палăртрĕ ертÿçĕ.

ЧР Президенчĕн гранчĕпе «Авалхи сас», «Чăваш халăхĕн чи лайăх юррисем» программăсем лартнă. Çитес вăхăтрах куракан умне «Юрлăр кăна, юрлăр» программа тухĕ. Ăна чăваш халăх юррисенчен, такмакĕсенчен хатĕрленĕ.

**Валентина ПЕТРОВА.**

СПОРТ

# Ырă тĕслĕх

2013 çул пирĕн республикăри физкультурăпа спорт аталанăвĕн историне яланлăхах кĕрсе юлĕ. Раççей Федерацийĕн регионсен хушшинче пĕлтĕр ирттернĕ конкурсра Чăваш Ен пуçласа пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Раштав уйăхĕн варринче РФ физкультурăпа спорт министрĕ В.Мутко «Раççей регионĕ» кубока тата ытти награднăна Чăваш Ен Пуçлăхне М.Игнатьева пачĕ.

Пĕлтерĕшлĕ çак çитĕнÿре республика ертÿçисен – Михаил Игнатьевпа ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕн Юрий Поповăн – тÿпи çав тери пысăк. Иккĕшĕ те вĕсем ачаранах спортпа туслă. Çитĕнекен ăрăва халĕ те ырă тĕслĕх кăтартаççĕ.

Кăрлач пуçламăшĕнче Пĕтĕм Раççейри спортпа сывлăх вунă кунлăхĕ иртрĕ. Шупашкарти хĕллехи спорт центрĕнче йĕркеленĕ уява Михаил Васильевич çемйипе хутшăнчĕ. Хăй вал пилĕк çухрăмлă дистанцире палăрчĕ.

Кăрлач уйăхĕн варринче Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕн çĕнелнĕ манежĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕн Кубокне çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетика енĕпе Пĕтĕм Раççейри ăмăртусем иртрĕç. Унта çамрăк спортсменсемпе пĕрле тĕнчипе паллă атлетсем те хутшăнчĕç. Михаил Васильевичăн тĕп парнине чи малтан çак хулари Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен, Европăри çамрăк çăмăл атлетсен чемпионачĕн призерĕ Екатерина Блескина çĕнсе илчĕ. 20-ри пике 60 метра барьерсем урлă 8,41 çеккунтра чупса тухрĕ, республика рекордне çĕнетрĕ, Раççей чемпионатне кайма путевка çĕнсе илчĕ. Тĕрлĕ дистанцире чупса ăмăртассипе тата хăвăрт утассипе Шупашкар районĕнчи Александр Новиков, Патăрьелпе Елчĕк тăрăхĕсенчи Кирилл Фроловпа Ирина Юманова, Ольга Николаевăпа Зинаида Антонова, Тăвай пики Надежда Макеева, Муркаш районĕнчи Вера Васильева, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн агрономи факультечĕн студентки Елена Горшкова тата Олимп резервĕсен училищинче вĕренекенсем малти вырăнсене йышăнчĕç.

Чăваш Республикин парламенчĕн спикерĕ Юрий Попов Елчĕк районĕнчи Лаш-Таяпари вăтам шкулта вĕреннĕ чухнех кире пуканĕ йăтма пуçланă. Физкультура учителĕ А.Кондратьев ертсе пынипе вăл юлташĕсемпе пĕрле республикăри ăмăртусене хутшăннă. 1977 çулта вун ултă çулти Юрий Попов Чăваш Ен чемпионĕн ятне çĕнсе илнĕ, тепĕр икĕ çултан вара Лаш-Таяпа каччи Калининград облаçĕнче ирттернĕ ăмăртура «РСФСР спорт мастерĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. 1980 çулчен çĕр-шывра кире пуканĕ йăтассипе унран çамрăкрах спорт мастерĕ пулман.

Юрий Попов парнисене илессишĕн 2012 çултанпа Атăл тăрăхĕнче çак енĕпе усă турнир йĕркелеççĕ. Пĕлтĕр Елчĕкри «Улăп» спорт керменĕнче иртнĕ турнирта пĕрремĕш вырăна Юрий Алексеевич ентешĕсем йышăнчĕç, куçса çÿрекен кубока тивĕçрĕç. Малти вырăнсене çавăн пекех Йĕпреç, Тăвай, Патăрьел районĕсен, Шупашкар тата Канаш хулисен, Чĕмпĕр облаçĕн, Мари Республикин атлечĕсем тухрĕç.

Виççĕмĕш усă турнира Вăрнар поселокĕнче ирттерме палăртнă. Кăçалхи ăмăртусене пăхаттирсем Питĕр хулинчен тата çĕр-шыври çичĕ регионтан хутшăнаççĕ.

**Петр СИДОРОВ.**

# Шахматçăсем тупăшрĕç

Хĕллехи канмалли куна кашни хăй пек ирттерет. Кам тилĕ е мулкач тытма вăрмана утать, кам çĕнĕ пÿрт ĕçкине йыхравлать, кам тăванĕ патневаскать, кам телевизортан уйрăлаймасть, кам – черккерен....

Вуннăмĕш çул ĕнтĕ Иккасси ялĕнче, Христос çуралнă кун, шахматла выляксем вăй виçеççĕ. Кÿкеççем те, Атайкассисем те, ытти ялтан та килеççĕ.

Кăçал малти вырăнсене Ю.Андреевпа çак йĕркесен авторĕ йышăнчĕç. С.Ванюшкин виççĕмĕш вырăна тивĕçрĕ. В.Марков, С.Евсеев, Е.Ломоносов лайăх комбинацисем йĕркелесе палăрчĕç. Çамрăксем те аслисенчен шахмат вăрттăнлăхне пĕлсе юлма пуçтарăннă. «1 Мая» колхозра тракторист пулса ĕçленĕ П.Никифоровăн мăнукĕсем уйрăмах кăсăкланчĕç.

Шахматçăсене, хăнасене тата курма килнĕ çынсене Иккасси клубĕн директорĕ Галина Емельянова чейпе хăналарĕ.

Нарăсăн 23-мĕшĕнче, Тăван çĕр-шыв хÿтĕлевçисен кунĕнче, шахматçăсем каллех пĕр-пĕринпе тупăшма хатĕрленеççĕ.

**Николай ПЛАТОНОВ, Шупашкар районĕ, Шоркка ялĕ.**

СĂНАВСЕМ

Алăк хушшине ура хĕсĕнсен çын килет.
Сулахай урана малтан тăхăнсан вылăх-чĕрлĕх ĕрчемест.
Ура тĕпĕ кĕçĕтни – вăрăм çула тухасса.
Пÿртре ура шăнсан çанталăк ăшăтмĕ.
Сулахай ура тупанĕ кĕçĕтсен савман хăна килет.
Сылтăм урапа такăнни – телее, сулахаййипе – инкеке.
Урана сĕтĕрсе утакан выçă ларать теççĕ.
Хĕрарăм ури урлă каçсан ачи урлă килет теççĕ.
Хĕрарăм хыççăн мунчана кайсан ийе чăмлать теççĕ.
Упăшки инçе çулта чухне арăмĕн алкапа çÿреме юрамасть, унсăрăн мăшăрĕ ют хĕрарăмсем çине пăхать.

РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРÿСЕМ

ОАО «ЧУВАШВТОРМЕТ»
Лицензия № ЧР 2101/03 от 31.08.2001.
ЗАКУПАЕМ ЛОМ ЦВЕТНЫХ И ЧЕРНЫХ МЕТАЛЛОВ ДОРОГО.
г. Чебоксары, Гремячевский проезд, 5 а.
Тел.: (8352) 63-42-12, 63-51-84.

ПРОДАЮ

**1. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**2. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**3. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**14. Гравмассу,** гравий, **песок,** щебень, **керамзит.** Доставка. Т. 89053465671.

«ХРЕСЧЕН САССИ» Обществăпа политика хаçачĕ Индекс 54838 Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. Николаева (тел. 56-34-63)
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru, e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă. Заказ 274 Тираж 4380

* Рекламăпа пĕлтерÿсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерÿсемшĕн вĕсене паракансем явапла.